К 8(Чув)
А94
29443-чув



АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

# ҪУРХИ АСЛАТИ

Национальная библиотека ЧР
4-029443

29443 чув

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская т. З. 1253 Т. 10.000

К
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

К С (чув
А 94

# ÇУРХИ АСЛАТИ

САВАСЕМПЕ
ПОЭМАСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1986

Обязат. экз.

ББК 84.Чув 7
А 94

ПРОВЕРЕНО
20 ю 11 ОКТ 2017

29443 чув.

Чувашская
Республиканская
БИБЛ. ТЕКА
им. М. Горького

**Афанасьев А. А.**

А 94 Çурхи аслати. Сăвăсемпе поэмăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1986.— 96 с.

35 п., 1000 экз.

Кĕнекене поэт юлашки çулсенче çырнă сăвăсемпе поэмăсене кĕртнĕ. Вĕсенче вăл совет çыннисен иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхне мухтать, мирлĕ пурнăç-шăн хастаррăн кĕрешме чĕнет.

**ББК 84.Чув 7**

**А $\frac{4702010200 - 053}{М 136(03) - 86}$ 51 — 86**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1986 ç.

## КИЛ, ÇУРКУННЕ

Çуркуннен кашнин пур çĕнĕ çилĕ,
Çĕнĕ çумăрĕ пур çуркуннен.
Кăнтăртан вĕçсе хуркайăк килĕ,
Çĕнелсе ешерĕ çĕр-анне.

Çуркунне çуралĕ çĕнĕ юрă,
Çуркуннен пур çĕнĕлле ташши.
Пуçласа тĕнче çĕн кайăк курĕ,
Çĕн тырпул ӳстерĕ çĕр ăшши.

Çуркуннен пур çĕн сукмакĕ, çулĕ,
Çĕнĕ савнисем пур вăйăра.
Юр кайсассăн, çĕн çăлкуçĕ пулĕ,
Çĕн турат кăларĕ ват йăмра.

Ĕмĕрех çапла: Çĕнни — çĕнтерĕ,
Çĕр тĕпне пытарĕ киввине.
Çуркуннеçĕм!
Асамат кĕперĕ,
Аслати пулса кил,
çуркунне!

## ÇУРХИ ШАВ

Çурхи шывпа шавлать çырма,
Кӳлленчĕ шыв урамсене.
Хăрушă пек çĕре пусма —
Шур пĕлĕтпе тӳпе çине...

Шыва кĕрсе, кашлать йăмра
Хăйне курса савăннăран.
Шыв çаврăнать хăвалăхра,
Ишĕлесрен хăрать çыран.

Çыран çинчи мунча патне
Пăрсем сикеççĕ çырмаран.
Хумсем хупланă çăлсене.
Пĕвӳ ан татăлтăр, арман!

Пăр кайнине курмасть курак,
Шава хупласшăн туй тăвать.
Тӳпе тăп-тăрă, кăн-кăвак.
Аташнă çилĕ юр шырать.

Варта шăв-шав, чупать çырма,
Такам тустарнă пек хыçран.
Çурхи шава, çурхи хума
Кашни çулах курасчĕ ман!

## ХĔЛ КАЯТЬ

Хĕл каять.
Пăр каять.
Выляса юлар-и юрпала?
Хĕл-аппа
Çунапа
Тухрĕ çул çине — ăсатмалла.

Уялла
Утпала
Ҫил-тăман вĕҫтерĕ хӳхлеме.
Урама
Шартлама
Сивĕ тухмĕ кантăк тĕрлеме.

Хĕл каять,
Пуҫ таять
Шăнкăр-шăнкăр кĕмĕл шӳкĕрпе.
Ҫуркунне
Килнине
Вăл курса каясшăн куҫҫульпе.

## КĔРЛЕТĔР АСЛАТИ!

Ҫĕр ҫуркаланчĕ. Типĕ шăрăх.
Тавралăх кĕтрĕ ҫумăра.
Ҫӳрерĕ ҫавраҫил ҫул тăрăх.
Шур пĕлĕтсен купи кăтра.

Кĕтӳ килмесĕр каҫ пулассăн
Кăвак сăн ҫапрĕ анăҫа.
Кĕҫ сулхăн ҫилĕ кассăн-кассăн
Хир ҫийĕн иртрĕ калаҫса.

Ку — аякри тӳпе хыпарĕ,—
Пĕлтерчĕ ҫумăр килнине.
Хура вăрман каш-каш шавларĕ,
Қата шыв сыпрĕ ҫăварне.

Шăпланчĕҫ харăс хир те улăх,
Қурсассăн тĕксĕм пĕлĕте.
Пăшăлтатма ҫитмест хăюлăх —
Ҫуталчĕ хĕҫ, ав, пĕр тĕлте.

Çил иртрĕ те, пуçланчĕ çумăр,
Аçа çапса, шатăртатса.
Ан чарăнтăр-ха, ырлăх çутăр,
Ĕçчен чуна савăнтарса.

Пĕлĕтсене çурать вут çиçĕм,
Чĕтрет тĕнче, кĕрлет тӳпе.
Мана тем мар. Сана, савниçĕм,
Хупласчĕ хурăн хӳттипе.

Ан тив, татах, татах кĕрлетĕр
Çӳлте хăватлă аслати!
Аш çумăрсем тăкса çӳретĕр
Сар асаматăн кĕвенти.

Çав кĕвенте сӳнсессĕн, тухăн,
Савниçĕм, эс кĕвентӳпе.
Çырма юхса пăтранĕ шуххăн,
Çуталĕ çăвăннă тӳпе.

## ЯЛТИ ÇУМĂР

Çиллĕ çумăр йăмрана силлет.
Ман пуçелĕк — хурăн милĕк.
Йăлтăр-ялтăр çуталать кĕлет.
Шурăмпуçĕ час-и килĕ?

Сар хĕвел тухсан та ял çине,
Асатма мана ан тухăр.
Асănса ача чухнехине,
Çил кашлатăр, çумăр çутăр.

Хулара та çумăр пур, анчах
Ялтинчен сасси ун урăх.
Кирлĕ мар мана мерчен, ахах,
Çумăрпа çиçсессĕн курăк.

Чупĕ урамра çара уран
Алхасса хавас ачалăх.
Пыл шăршийĕ килĕ пахчаран,
Чĕнĕ вăрмана кăмпалăх.

Улăх хӳттине, кĕтӳ патне,
Анĕ асамат кĕперĕ.
Юрататăп эп ял çумăрне —
Çăкăр парĕ, сĕт ĕçтерĕ.

## ХУТ ÇĔЛЕН

Вĕçетчĕ хут çĕлен çӳле.
Хӳри ун пулнă вăрăм мунчала.
Пăхаттăмăр тӳпенелле,
Сăртра чупаттăмăрччĕ лашалла.

Эй, хут çĕленĕмĕр-çĕлен!
Шур пĕлĕте лек, пăхăнтар çиле!
Хăпас килетчĕ-çке çĕртен,
Тытса курас килетчĕ хĕвеле!

Çав вăрăм хӳререн çыхса
Яраттăмăр та çĕтĕк карттуса,
Эпир, çын вĕçнĕн космоса,
Сиксе ташлаттăмăр хавасланса.

Ырлатăп эпĕ халĕ те
Хут çĕленрен пуçланнă ĕмĕте.
Сăртра çарран чупман çынран
Мĕнех эпир кĕтейĕпĕр ыран?

## ТĔРĔСЛĔХ ÇУРАЛНИ

Çулсерен чĕртсе уй-хирсене,
Тусене, çара вăрмансене,
Хăш енчен килет-ши çуркунне?
Шурă пĕлĕтсем кăтралансан,
Ҫайăксем килеççĕ кăнтăртан —
Унтанах-шим çуркуннеçĕм ман?..

Сар хĕвелĕн янкăр çутинче
Ал çупсах ташлать, юрлать тĕнче —
Çуркунне вăратнă кĕслеçе!
Çуркунне Ильич çуралнăран
Шыв тумларĕ кĕмĕл çуртаран,
Атăл йăшăлтатрĕ сарлакан...

Çулпуçпа пĕрле, пĕр сехетре
Тĕрĕслĕх çуралнă тĕнчере —
Савăнса пăхатăп Чĕмпĕре.
Çавăнтан пуçланнă çуркунне,
Çут телей саланнă çĕр çине,
Хĕретсе шуралнă сăнсене.

Çуркунне ăçтан килет тесен,
Ҫăнтăртан тесессĕн, ан ĕнен —
Вăл килет Ильич çĕршывĕнчен.
Хамăрах Çĕршывăмăр-анне
Ăшăтать ытти çĕршывсене —
Хамăр Çĕршывра-çке Çуркунне!

## МАЛАШЛĂХ

Эп манаймастăп иртнĕ кунсене.
Килес кунăмсене пĕлесчĕ ман.

Начар пулсассăн,
ямăп çын çине —
Қашни пĕр утăмăм килет хамран.

Манран кăна та мар.
Эп пĕр-пĕччен
Пурăнаймастăп.
Эсĕ те çаплах.
Ильич каланă пек утсан, ĕнен:
Малашлăх пулĕ çĕр хут лайăхрах.

Утатăп эпĕ парти ретĕнче.
Утаççĕ комсомолецсем пĕрле.
Ялан çапла утсан, мĕнпур тĕнче
Ĕмĕрлĕхе вăрçа сӳнтермелле.

Малашлăхшăн эпир кĕрешмесен,
Қамсем кĕрешчĕр пирĕншĕн, юлташ?
Чĕрере тапсассăн юнĕ аттесен,
Ан иккĕленĕр: хамăрта — малаш!

## ХĔÇПĂШАЛА ПĔТЕРМЕЛЛЕ

Вăрçăран киле таврăннинчен
Пур-ши-ха тата телей тени?
Килĕнте аçу-аннӳ кĕтсен,
Кӳршĕре кĕтсессĕн чун савни?

Эс килте шăп вăтăр ултă çул.
Халь кăна пек таврăнни киле.
Хутаçа туять-ха сылтăм хул,
Сулахайĕ — çакнă шинеле.

Курăк пуснăччĕ хирти çула
Пит сайра пуль иртнĕ урапа.

Çуранах эс таврăнтăн яла,
Қайнă чух ăсатрĕç лашапа.

Юрăпа ăсатрĕç, куççульпе...
Иртнине халь шухăшлатăн та —
Гимнастерка — кивелми кĕпе
Упранать-ха пирĕн чăланта.

Ват салтак, ларатăп урамра,
Майĕпен ĕметĕп чĕлĕме.
Çамрăк салтака курсан вара,
Эс çитмен пек халь те çирĕме!

Саралма пуçланă çар тумне
Тăхăнатăн. Қуртăр пĕтĕм ял:
Қăкăру тулли медальсене
Ахальтен çакман пуль генерал.

Тăнăç та тату пурăннинчен
Пур-ши çĕр çинче телей татах?
Ыйтăр вăрçă курнă çынсенчен —
Вăрçă тамăкне пĕлет салтак.

Вăрçă кирлĕ мар! Пĕрле ялан
Хĕвелпе Çĕр курччăр ырлăха.
Çĕр çинчи мĕнпур хĕçпăшалтан
Тахçан шăратмалла ака-суха!

## ХĔВЕЛ

Хура куççем, хăмăррисем, кăваккисем...
Тем чухлĕ куç! Пур сенкерри,
пур чакăрри...
Пĕри кулать, тепри куçа пăвать килсе,
Асаплă юрату сĕнет çиçсе тепри.

Суя куçсем, ултавçисем, хаяррисем...
Куçран пăхса, чуна кураканни сайра.
Куç тĕсĕ улшăнать, сӳнет çул иртнĕçем.
Анчах пĕри сӳнмест. Çунать ялан вутра.

Хĕвел! Çут тĕнчене сăнать вăл тӳперен.
Пайăркисем — ука куç хăрпăкĕ пекех,
Çĕре, тăван хĕрне юратнă пек, чечен
Лăпкать вăл аякран:
мĕнле пурнать пике?

Сенкер пĕркенчĕклĕ пĕртен-пĕр Çĕр-пике
Мĕнле çилпе сывлать
Илтет мĕнле юрра?
Мĕнле пурнать этемлĕх?
Мĕнлерех йĕрке?
Çĕре асап кĕтмест-и вĕççĕр уçлăхра?..

Çĕре парне сахал паман Хĕвел-анне,
Виçепеле валеçнĕ, ытлашши паман.
Ăш çумăрта кăтартнă аслати вутне,
Вутпа вăл никама та выляма хушман.

Сенкер пĕркенчĕклĕ хитре хĕр—Çĕр-пике
Вутпа чĕртсе ярас пулсан хăйне тепре,
Хĕвел текех алра тытаймĕ тилхепе,
Хăй аллинчен вĕçертĕ пăхăнман хĕре.

Ан пултăрах апла! Çĕре ан хыптăр вут!
Тирпейлĕн тытса усрар вут-кăвара!
Вутпа вылякана тĕп тутăр Аслă Суд.
Çĕр ĕмĕр-ĕмĕр çаврăнтăр Хĕвел тавра!

Хура куçсем, хăмăррисем, кăваккисем
Ыр курччăр ĕмĕрех хĕвеллĕ çĕр çинче.
Ан пулччăрах суя куçсем, ултавлисем —
Тек ан çураттăрах ун пек çынна тĕнче.

Таса чунлисене кăна савать Хĕвел.
Эпир Хĕвел ачи пулсан, пирте — вăй-хал.
Хĕвелшĕн, миршĕн янратар юрра-кĕвве,
Чи вăйлă юррăмăр — Интернационал!

* * *

Санран сумли пулман, çуралнă çĕрĕм!
Шур хурăнăм — хуравсăр хурăнташ...
Умран кайсан та, тĕлĕке эс кĕрĕн,
Ăрша чаршавлă шăркари ыраш...

Эпир тăван çĕре тарпа шăварнă,
Юнпа йĕпетнĕ, çунă куççульпе.
Шăнса, çунса, танкканă
вут-кăварлă,
Ылханлă вăрçă чавнă çулсемпе.

Вăрçăпала текех ан астăр вупăр.
Эпир калатпăр:
— Бомба кирлĕ мар!
Нейтронлă-и, е водород-и—
пурпĕр,—
Ан астăр ӳлĕм
çĕр çинче
пушар!

Ĕçлет, юрлать, вĕçет çунатлă халăх,
Хăватлăн ăнтăлать малаш енне!
Паян кашни ĕçлет —
Çĕршыв курмалăх,
Тĕнче курать
Тăван çĕршыв ĕçне!

## ВИЛĔМСĔРЛĔХ

Вăрçă витĕр вичкĕн çилĕ
Шăхăрса ÿленипе
Çĕр çинче ташларĕ вилĕм
Шăкăр-шакăр шăммипе.

Килĕрен асса çÿрерĕ
Хуçалла кĕре-кĕре.
Ваттине те шеллемерĕ,
Хĕрхенмерĕ сар хĕре...

Ун ташши — хăрушă ташă —
Сиккелерĕ ялсерен.
Çăлăнса тухса тармашкăн
Çукчĕ ун ытамĕнчен.

Вилĕмсĕр салтак хаяррăн
Хĕç туптарĕ çиçĕмрен.
Çĕр-анне вăй пачĕ: «Çарăм,
Хĕрлĕ Çарăм, эс çĕнен!»

Йывăр пулчĕ вăрçă хĕçĕ,
Чарчĕ вилĕм ташшине.
Çилпеле ун кĕлĕ вĕçрĕ
Çитмĕл тинĕс леш енне.

Вилнисем тăраççĕ сумлăн
Шурă палăксем пулса.
Паттăрсен ятне Çĕршывăм
Асăнать пуçне тайса.

## ШĂПА

Ват салтак калавĕ çакă.
Мĕн-ха вăл тивен шăпа?
Иртес çук унран салтак та —
Тăллĕ тимĕр тăлăпа.

Вăрçăра салтак сăнарĕ,
Курчĕ тĕрлĕ шăпана:
Е сана медаль вăл парĕ,
Е шăтарĕ çамкуна...

... Ӳкнĕ эп. Тавра шап-шурă.
Пĕлĕт те шап-шурă юр.
Мĕлкесем умранах шурĕç,
Кăшкăрашнă сасă пур.

Пуçланать иккен атака.
Танк çунать, йăваннăскер.
Йĕлтĕрпе шăван салтакăн
Автомат çинче мĕскер?

Тĕтреленчĕ куçăм-пуçăм,
Тăрас çук ура çине.
Аллăма пăхсассăн, куртăм
Пĕчĕкçĕ çын мĕлкине.

Шутсăрах хама вăл хывнă,
Сăнĕ-пичĕ ют çын мар.
Куçĕсем пăртакçă шывлă.
— Кам эс?— тетĕп.— Ан пытар.

— Сан шăпу эп!— терĕ явăл.—
Итлемех мана тивет.
Кĕсйӳнтен кăлар-ха, Павăл,
Бинтлă, мамăклă пакет.

Пит-куçу суранлă санăн.
Пакетна çурсам чăр-чар!
Хăвăрт-хăвăрт çыхмасассăн,
Павăл тус, мана каçар...

Пăрахса сана каятăп,
Юр çинче вилсе юлах!..
Тĕлĕк витĕр эп туятăп:
Сурана ман çыхмаллах.

Çыхрăм. Рота санитарĕ
Сĕтĕрме пуçлать вăйпа.
Малалла тĕртме пуçларĕ
Умăмри мĕлке — Шăпа.

Ак мĕнле иккен этемĕн
Хăй курман-пĕлмен Шăпи!
Вăйлă çыннăн вăл хĕлхемĕн
Ялкăшать — кăвак хуппи!

Вăйсăррин Шăпи те вăйсăр —
Куртăм эпĕ хамăнне —
Халь сӳнес пек, йăсăр-йăсăр
Тĕлкĕшет вĕт — хуть хĕне!

Медсанчасть патне çитерчĕ,
Сывлăх сунчĕ санитар.
Турĕç те укол, вĕçтерчĕ
Ман Шăпаçăм. Тыт-ха, чар!..

Унтанпа пачах курмастăп,
Таçталла çӳрет Шăпа.
Пытармасăрах калас-тăк,
Çумăмрах пек, хам шутпа.

Пуç тăрне телей те çурĕ,
Хуйхă-суйхăм та хампа.
Хамшăн эпĕ хам пĕр турă,
Хамшăн эпĕ хам Шăпа!

## ТЕЛЕГРАФ ЮПИ

Аллине тăсса выртнă çын евĕр
Телеграф юпи ӳкнĕ çул урлă.
Никама та чĕнмесĕр, илтмесĕр
Янăрать пăралукĕ çеç хурлăн.

Бомбăпа тупăсем чавнă вырăн —
Тăпрапа хутăш шăмă та тимĕр...
Çакăнта-çке çын пураннă ыррăн,
Хир кашланă, тет, вĕçĕ-хĕррисĕр.

Телеграф юписем ларнă тӳрĕ,
Ҫалаçтарнă çынна пăралукĕ.
Пăралук тăрăх юхнă пуль юрă —
Юрăпа юрату пĕрле юхĕ...

Чĕрĕ çын пек, тăвасшăн атака,
Телеграф юпи ӳкнĕ, шăпланнă.
Вилес умĕн пехота салтакĕ
Ҫалаçман юпана ыталанă.

Виличчен пĕлтересшĕнччĕ пулĕ
Хăй çинчен амăшне паттăр ывăл:
«Ҫунçула çамрăкла татрĕ пуля —
Вилĕмрен хăрамарăм эп... Сыв пул...»

Выртнă, хĕрес пек, юпи телеграфăн,
Вилнисем хушшине кĕç тăрассăн.
Вилнисем хушнипе тем калассăн,
Пăралукĕ янрать, çил тухсассăн.

## ÇУХАТМАРĂМ

Хреснаннеçĕм панă укçана
Пилĕк çул çӳретрĕм çумăмра.
Çухатмарăм çул çинче ăна,
Вакламарăм кирлĕ вăхăтра.

Хам куçпа хам куртăм тамăка,
Вăйлă пултăм виçĕ вилĕмрен.
Тăвансем каланă сăмаха
Саманта ямарăм чĕререн.

Куртăм эпĕ çуннă ялсене
Вăрçă тӳснĕ халăх куçĕпе.
Хуратмарăм савнă хĕр сăнне
Çумăрпа, пушар тĕтĕмĕпе.

Çул курки ăсатнăччĕ çула,
Çĕклентерчĕ çĕнтерӳ курки.
Курмалли нумай-ха малалла,
Ĕмĕре çитмелĕх мĕн курни.

## ВИÇ КĔТЕСЛĔ ÇЫРУ

Виç кĕтеслĕ çырăва
Ӳсекен яш ăрăва
Кăтартас килет.
Хĕвелпе саралнăскер,
Маншăн хаклă çав хатер,
Виç кĕтес — пичет.

Те хирте, те пĕр ялта
Çырнă çырăвне салтак
Тахăш вăхăтра.



29443-чув.
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Çĕр чĕтренĕ ун чухне,
Окопри пуçсем çине
Тăкăннă тăпра...

Çырнă пĕчĕк çырăва
Хăй çуралнă çĕршыва
Вăрçăри юлташ.
Юлашки сывлăшĕпе
Ăшăтнă пӳрнисемпе
Тытнă кăранташ.

Виç кĕтеслĕ çырусем
Вăхăт хăвăрт иртнĕçем
Хаклă кунран-кун.
Ту йăтми йывăрлăха,
Асапа, хуйха-суйха
Тӳснĕ паттăр чун.

## ВАТ САЛТАК

Асап тӳссе вăл тавранчĕ киле.
Çунтарчĕ вăрçă ун ӳтне вутра.
Çут шурăмпуç сӳнместчĕ тек çĕрле,
Кĕле путатчĕ утнă чух ура.

Шинель аркийĕ ĕннĕ салтакран
Туяттăмăрччĕ вăрçă тĕтĕмне.
Арçын алли пит кирлĕ пулнăран
Çул тытрĕ каччă Туймаза енне.

Туймазари газ факелĕн çути
Вăрçа асилтеретчĕ хăш чухне.
Нефть вышкисен янăракан утти
Тутарстана та çитрĕ çуркунне.

Сӳнмесӗр ялкӑшрӗҫ газ ҫутисем,
Салтак алли хуралчӗ нефтьпеле.
Ҫунатлӑ факел! Куҫ тулли илем!
Ҫилпе пӗрле ма санӑн вӗҫмелле?..

Ҫӳрет салтак ҫуртран ҫурта кӗрсе,
Килӗренех чӗртсе ҫӳрет кӑвайт!
Газ ҫунтӑрах асамлӑн кӗрлесе,
Салтак ҫинчен хӑвартӑр ырӑ ят.

Элмет текен ҫап-ҫамрӑк хулара
Пӗлмен ҫын ҫук халь вата салтака.
Пӗр ывӑлӗ ӗҫлет Сахалинра,
Теприн кил-ҫурчӗ — Ҫӗпӗрти тайга.

Асне илсессӗн иртнӗ ҫулсене,
Ир ватӑлнӑ салтак куҫне хупать:
Хӑй ҫутнӑ газӑн ӑшӑ ҫутине
Вӑл халӗ нимӗҫ ҫуртӗнче курать...

— Туссем пӗр тӑванлашнӑ вӑхӑтра
Тек курас марччӗ юнлӑ пушара,—
Ҫапла калать Элмет те Туймаза,
Ыр туслӑх ҫулӗпе газ ӑсатса.

## АЯКРАНАХ ПУЙӐС КИЛЧӖ

Аякранах пуйӑс килчӗ,
Пуйӑс килчӗ Карпатран.
Аякра Карпат ту ҫийӗ.
Курӑнмасть пире кунтан.

«Ах, Карпат енне ан асӑн,
Курнӑ унӑн «ырлӑхне»...
Ман кукка сывлатчӗ ассӑн,
Асӑнсан Карпат ятне.

Нимĕçсен пули, «дум-думĕ»,
Татнă аллине касса,
Пушă çанăллă костюмĕ
Асăнтаратех вăрçа.

Ывăлĕ куккан кĕтмешкĕн
Килнĕ пуйăса паян.
Карпатра вутра кĕрешнĕ
Иртнĕ вăрçăра Çтаппан.

Карпатра ун камĕ юлнă?
Кам пур куккана тăван?
Карпатра ун юхнă юнĕ,
Хĕретсе чула... тăва...

Карпатра шăмми те ӳчĕ
Юлнă-çке — хăрах ура.
Юр пекех шуралнă çӳçĕ
Пулнă ун чухне хура.

Пулнă çамрăк, йăрă каччă —
Пурнăçри чи ыр самант.
Пурнăç чечекне курманччĕ,
Вăхăтсăр ăна салат!

Партизан пулса çӳрерĕ,
Хăй те тухнăн çакăнтан,
Хĕрлĕ Çарăн офицерĕ,
Раççейри чăваш — Çтаппан.

Пысăк марччĕ ун отрячĕ.
Халь кунта, ыран — лере.
Ыр çынна нумай хăтарчĕ,
Тăшмана хире-хире.

Ăнăçу ялан çул уçмĕ,
Тем пулать çынна ыран.
Çулăм çиçрĕ, сывлăш хумĕ
Çапрĕ. Ӳкрĕ капитан.

Пăрахмарĕç. Çывăх курчĕç
Урaран ӳкнĕскере.
Пысăк мар пулсан та пӳрчĕ,
Вырăн сарчĕç кĕтесре.

Тухтăрне те тупрĕç. Касрĕ
Ват поляк ун урине.
Медсестра, манми хĕр Катря
Уншăн пачĕ пурнăçне.

Тăшмансем урса çӳрерĕç,
Тем шырарĕç килĕрен:
— Пур-и вырăс капитанĕ?!
Кам хăтарчĕ вилĕмрен?!.

Тахăш сутнă. Вилчĕ Катря...
Сикрĕ тĕпсĕр çырана...
Юрату вăйне кăтартрĕ
Карпатри пур таврана.

Сывă-ха хăрах уралла
Кĕçĕнни — Çтаппан куккам.
Çӳçĕ шуçăм пек шуралнă.
Куçĕнче чĕтрет тумлам.

Аякранах пуйăс килчĕ,
Пуйăсра — ун хăнисем.
Çĕтнĕ, чĕрĕлнĕ те вилнĕ,
Çапăçнă татах вĕсем.

Поляка та, вырăса та
Астăвать унти Карпат.
Панулми паратчĕ сачĕ,
Кукуруза, виноград...

Пĕр-пĕрне аран палларĕç
Людвиг, Эльза, Ян, Çтаппан...
Кирлĕ мар нейтрон, поларис *
Вăрçă кирлĕ мар нихçан.

Аякранах пуйăс çитрĕ
Белоруссн вокзалне.
Ыталарĕ, çумăн тытрĕ
Чун тăванĕ тăванне.

Кăшкăртса кунтан йыхравлăн
Кайĕ пуйăс чăваша.
Хапăллать Эльгер-çыравçă
Карпатри тăван йыша.

Çавăнта Семен Васильев
Çапăçнă пиртен малтан.
Чăваша сахал-и çинĕ
Каярах унти çăхан?..

Паттăрсен ятне упраççĕ
Карпатри ту хырçисем.
Хыр вăрманĕсем янраççĕ:
«Тек ан пулччăр вăрçăсем!»

Аякранах килчĕ пуйăс,
Килчĕ пуйăс Карпатран.
Хĕвелпе хĕрелчĕ тухăç.
Саврĕ тăвана тăван.

---

* Нейтрон, поларис — Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен атомлă хĕçпăшалĕсем.

## ХУҪА

Ҫаска ҫинче лараççӗ ватӑсем.
Хӑлаç ҫитми кӗреш-юман ҫаска.
Ҫуç умӗнче шӑваççӗ ӗмӗрсем —
Мӑнукӑм, эс ан ватӑл, ан васка!

Пуплеççӗ ватӑсем: «Ҫаплаччӗ ӗлӗк...
Вӑрман анатчӗ хамӑр ту ҫинех.
Ту айӗнче шӑнкӑртататчӗ ҫӑлӗ,
Ҫурасчӗ айлӑмри улӑхсене!

Такам касса пӗтерчӗ ҫирӗке,
Типсе ҫухалчӗ шӑнкӑрти сырма.
«Пусса ан сур,— каланӑ ӗлӗкех,—
Хӑвах унта килетӗн шыв ӑсма!»

Этемлӗх килӗ-ҫурчӗ — ҫутҫанталӑк.
Йӗрки-саккунӗсем ун пит кӑра.
Ӑҫта шыв пур, унта кирлех хӑвалӑх.
Ӑҫта пушхир, унта ҫӑл ан шыра...

Хуçасӑр кил тухать час йӗркерен.
Юпи ҫӗрсен, тӳнет карти-хури...
Хуçалӑхра хуçа кирлех иккен,
Ҫанталӑкӑн хуçи те пултӑр-и!

Ӑҫта ҫӳретӗп — ҫавӑнта хуçа эп,
Ӑҫта кайсан та, эсӗ те хуçа.
Эп ҫӗмӗрт ҫеçкине хӑйса хуçаймӑп,
Таптаймӑн эс ҫын лартнӑ йывӑҫа...

Ав, кӑткӑ сӗтӗрет килне тупра,
Пыл хурчӗсем сӗрлеççӗ таврара,
Ырми-канми чавать ҫӗр каюра —
Эс вӗсене ан тив, хуçа,— упра!

Эс пул хуҫа кашни чӗкеҫ чӗппишӗн,
Тӑри юрришӗн те эсех хуҫа!
Мулкач ҫури санран тутантӑр кишӗр,
Ялан ҫул уҫӑ пултӑр ҫӑлкуҫа.

Ҫанталӑкӑн тӑшманӗсем сахал,
Чи хӑрушши, тӑшманӗ,— пӗл,—
этем.
Вӑл упрама пӗлсен кӑна кал-кал,
Ҫунса ҫаралмӗҫ ҫӗрӗ-шывӗсем!

Этемлӗх килӗ-сурчӗ — ҫутҫанталӑк.
Этем пулма ӳстерчӗ вӑл пире.
Пиртен вӑл юлтӑр ыррӑн пурӑнмалӑх,
Илемлӗ пултӑр ӗмӗр-ӗмӗрех!

## ТАТУЛӐХ ПУЛСАН

Ик аллине этем ҫӳле йӑтать,
Хӗвел енне пуҫне пӑрать этем.
Вӑл уҫӑ сывлӑш,
сывлӑх вӑл ыйтать,
Пӗр ӗмӗре ҫитмелӗх —
пӗр хӗлхем.

Аллисене тӑсать тӳпенелле
Пур йывӑҫ-курӑк, ҫӗкленсе ҫӗртен.
Ирпе ирех тытасшӑн хӗвеле,
Ӑш ҫумӑрсем ыйтасшӑн пӗлӗтрен.

Сикеҫҫӗ кӑпӑклӑ хумсем ҫӳле,
Пуласшӑн ҫиҫӗм, шавлӑ аслати...
Янӑратаҫҫӗ кайӑксем кӗсле,
Ҫӳле вӗҫеҫҫӗ, пӗлӗте ҫити.

Пур йыва́ç-курăк, шыв та кайăксем
Хаваслăн ăнтăлаççĕ çӳлелле.
Çанталăкпа тату пулсан, этем
Пурăнмалла çĕр хут тĕлĕнмелле!

## ЧĔЛĔМ

Ĉăпчанкă чăпăка ĕме-ĕме,
Çулупа тивертнĕ чĕлĕме.
Пулмастчĕ шăрпăк пирĕн лавккара.
Ĉĕл айĕнче упранă кăвара.

Çав вăхăтрах фронт тăрăх вăрçăра
Сӳнтерейменпикам та пушара.
Унта сиксе, çӳренĕ вут-кăвар —
Лавккасенче пулса курман тавар.

Вучахшăн çеç тытасчĕ шăрпăка,
Ан сивĕнтĕрччĕ пирĕн кăмака.
Чĕлĕмĕме
Хуллен ĕме-ĕме,
Шухăшăмпа виçеп ĕмĕрĕме...

* * *

Вилнисене эп чĕрĕ пек куратăп.
Вăхăтлăха çеç кайнă пек таçта.
Йăлтах асран çухатасран хăратăп
Тахçан пĕрле ирттернĕ вăхăта.

Çук, хăрамастăп вилĕмрен. Вăл килĕ,
Ĉунта манса хăвармĕ никама.
Анчах та вăхăтсăр кама вăл кирлĕ?
Ан хăйтăрах ирех çава йăтма.

Чĕнĕ хăй патне раща,
Сырмари çăлсен шăнкравĕ.
Ăвăс вĕрлĕклĕ пахча,
Шур хурсен шыври утравĕ...

Килнĕ чух тăван çĕре
Тусене малтан куратăп.
Ачалла тапать чĕре,
Ун çине алла хуратăп.

Ман çĕршывăм! Хамăр ен!
Çакăнтан пуçланнă кунăм.
Малтанхи таппи чĕрен,
Çĕр çинчи пĕрремĕш утăм...

Ман сана-и-ха манас?
Çимĕк масарне килмесĕр
Ман пĕр çул иртмен пулас.
Ваттисем, ыр курăр эсĕр!

Çамрăксем умне тăрсан,
Пĕвĕмпе лутра эп халĕ.
Ăсăма виçсе курман —
Хам çуралнă çĕр мĕн калĕ?

Эп унтан иртеймĕп шит,
Эп хамран иртеймĕп утăм.
Хăш тĕлте лăпланĕ-ши
Чун-чĕреçĕм — хĕмлĕ вутăм?

Пулăп халăхпа пĕрле.
Ан янратăрах ют сасă.
Чунăм юратни пĕрре —
Савнă çĕрĕм, юрă-ташă!

## ЮРАТНĂ АТĂЛĂМ

Телейлĕ турăн эсĕ, аслă Атăлăм,
Пире ӳстернĕ шур Шупашкара.
Саламлă хăнаран нихçан та татăлмăн,
Ăна тыттарăн кăпăклă сăра.

Çĕклен, хумхан, хăватлă Атăлăм,
Санпа пĕрле çĕклентĕр чун-чĕре.
Анне тесе, вĕрин ыталăттăм
Сăпку çинче сиктернĕшĕн пире.

Юрла, юрла, юратнă Атăлăм,—
Ĕмĕртенпех эс чаплă юрăра.
Саркаланса ӳссе, эс ĕмĕр ватăлмăн,
Эс çамрăклатрăн ват Шупашкара.

Хĕвел çинче çутал, выля, мăн Атăлăм,
Çутту сан кайрĕ пĕтĕм Çĕршыва.
Фашистсене аркатрăн эсĕ, паттăр тăтăн,
Пур тĕнчипех тухайрăн мухтава!

Хаяр тăшман вакланчĕ татăк-татăкăн,
Эс юлтăн ирĕкре яланлăха.
Тавах сана, тавах, мухтавлă Атăлăм,
Ялан вăй парăн паттăр халăха!

## АСАТТЕСЕМ ПИЛЛЕНĔ ВЫРĂН

Асаттесем пилленĕ вырăн —
Тирек, йăмра та хурама.
Чăваш, удмурт, тутар та вырăс
Илем кӳреççĕ урама.

Пурнаççĕ çывăх хурăнташлăн,
Пĕрле янрать ташши-юрри.
Пĕлĕтелле тусем кармашнă,
Çĕршывăм ман — Урал хӳри.

Çак кĕтесре йăлтах пур маншăн,
Ним ыйтмалли те çук ытла!
Тусен тăрне пăр шуратманшăн
Ларса йĕрес-им ман çулла?

Вĕçмест çӳлте пĕр ăмăрткайăк,
Ту хĕррипе иртмест тĕве...
Шур пĕлĕтсем кăна нумайăн
Пуçтарăнаççĕ кĕтĕве.

Çав кĕтӳрен тытса шур сурăх
Çĕлетеймерĕм çĕлĕке.
Шур çĕлĕкрен килмест пуль туслăх,
Пăхмасть пуль туслăх енчĕке.

Чăваш, удмурт, тутар та вырăс
Тăван яла кӳрсе илем,
Пĕрле акса, пĕрле тыр вырĕç,
Ӳстерĕç çĕнĕ сăвăçсем!

Ан тив, ан вĕçтĕр ăмăрткайăк,
Ан пултăр тинĕс çывăхра,
Çапах кунтан тарса эп каймăп,
Тăван кĕтес, тăван тăпра!

## ПОЭТĂМĂР ПИРĔНПЕ ЯЛАН

*(Асаилÿ)*

Аппа тĕрленĕ шурă кĕпепе
Эп кайрăм Атăлпа Шупашкара.
Вунпиллĕкреччĕ çулпалан.
Йĕпе.
Тăратчĕ кĕркунне салху, хура...

Чĕнеççĕ Иванов юбилейне —
Поэтăмăр тултарнă аллă çул.
Çур ĕмĕр яхăн пирĕн «Нарспине»
Тăван çĕршыв вулать — эс пĕлнĕ пул!

Вăл вырăсла янрать пулсан, вара
«Нарспи» ятне илтмен юлташ сахал.
...Ирех ларать чăвашăм мунчара,
Туйне пуçлать-мĕн ватă Шур сухал!..

Хăнасемпе шавлать кив Шупашкар:
«Çут тĕнчере вăйли çук Этемрен!»
Панулмипе хĕрелнĕ çур пасар,
Хăна умне тухать чечекпелен.

Чăваш та çармăс, вырăспа тутар,
Удмурт та пушкăрт, Венгрирен те пур...
Ивник калать:
— Татах, Лекçей, куçар:
Çурри чăваш та эс, çурри — удмурт.

Ҫайри ретре ларатăп уявра.
Çут атăпа эп. Çÿç — хура кăтра.
Ухсай пичче килет, пăхать кăра:
— Манран ан юл. Мĕскер ларан кайра?!.

Çар тумĕпеччĕ Уйăп. Вăл ыран
Каллех каять, тет, чикĕ хĕррине.
Агаков таврăннă тин вăрçăран,
Салтак тăли чĕркенĕ урине.

Пĕлĕтсемпе хуралнă анăçран
Килетчĕ ĕнтĕ тар-етре шăрши
Чăваш поэзийĕ сас панăран
Хĕпĕртесе калаçрĕ пур Çĕршыв.

Калаçрĕ Жаров, Островой Сергей,
Калаçрĕç туслă халăх хăнисем...
Хăна çуртне кĕрсен, вĕретчĕ чей,
Çутăличчен янратчĕç сăвăсем.

Çав вăхăтрисем чылайăш çук.
Таврăнаймарĕç çăтă вăрçăран.
Вилмен вĕсем!
Сан евĕрех, Кĕçтук,
Çут тĕнчене вилмешкĕн çуралман!

Эс тăхăрвунă çул сыввисемпе
Утатăн алла-аллăн малалла.
Чĕресенче янăракан сăввусемпе
Эс яланах умра çуталмалла!

Çулсеренех ешертĕр çуркунне,
Шавлатăрах, кашлатăр сĕм вăрман!
Тăван чĕлхен хăвачĕ пур чухне,
Поэтăмăр, эс пирĕнпе ялан!

## АННЕ

Эп манмăп ватă салтака.
Вилсе куçне хупас чухне,
Ÿксессĕн тĕпсĕр шăтăка,
Вăл кăшкăрчĕ: «Анне! Анне!..»

Анне! Анне!..
Çак сăмахпа
Çăвар уçма шухăшличчен
Ыйтасчĕ ирĕк Уйăхпа
Çăлтăрсенчен те Хĕвелтен!

Çăлтăрсемпе çут Хĕвелтен
Тĕнче пуçламăшĕ пулсан...
Çуралнă пурте аннерен,
Аннесĕр çын тĕнче курман.

Пир кĕпепе çÿрет-и вăл,
Çиет-и çăкăрпа сухан,
Анне çуратнă хĕр-ывăл
«Анне» тесе чĕнет чунран.

Юлашкине парать пире,
Чи ăшшине, чи çемçине...
Ачи ун —
хăйĕншĕн пĕрре,
Этем пек тухтăр çын çине...

Анне! Анне!..
Юр-çумăрта
Сахал-и йăтнă вăл пире?
Юрри те юлнă хамăрта,
Ун юнĕ —
пирĕн сăн-питре.

Сахал-и ӳкнӗ пӗчӗк чух?..
Вăлах тăратнă, сурнă та...
Ӳсе çитсен, пуçна ан ух,
Ан сулăн йăнăш кукăрта!

Чӗрӳ тапсассăн кăкăрта,
Чуну пулсан, анне тесе,
Пӗр саманта ан ман ватта,—
Кӗтет вăл эсӗ килессе...

Çук, пулăшу кӗтмест санран,
Хăйса ыйтмасть пӗр пус укçа.
Пăхасшăн вăл сана куçран:
Ирех усмастăн-и пуçа?..

Аса илсе ват салтака,
Эп калăттăм çамрăксене
Чи хаклă, çутă сăмаха,
Сăмахӗ вăл пӗрре —
Анне!

## ХӖВЕЛӖМ-ТЕЛЕЙӖМ

Хам ирӗкпе килмен. Мана чӗнмен.
Кӗтсен те, кӗтнӗ пуль тăван аппа.
Аннеçӗм юмăçа çӳренӗ, тен:
Çуралăп кӗпепе е калпакпа?

Йăлт пулнă эпӗ килнӗ вăхăта:
Хӗвел те çутă,
пур çулла, хӗлле...
Тăла сăхман та çӗтӗк çăпата,
Анне нумай арланă кӗнчеле.

Ачалăхăм паянхи пек асра
Пăркучĕпе, çунашкипе пĕрле.
Ват кукаçи сыхлатчĕ пахчара,
Çăва тухсассăн, тунката вĕлле.

Шăп çавăнтан шутлатăп кунçула —
Утма, чупма, ӳкме вĕреннинчен.
Ун чух телейлĕн пăхрăм тавралла,
Тин тĕлĕнме пуçларăм тĕнчерен.

Хам ирĕкпе эп тытрăм кĕнеке,
Унпа эп тухрăм аслă урама
Çĕршывăм панă çутă Ирĕке,
Телейĕме мухтавлăн юрлама.

Кĕпеллĕ те калпаклă çуралман,
Хура сăнпа та чунăм хурланман.
Хĕвеллĕ çĕршывра кун курнăран
Телейлĕ тетĕп эп хама ялан.

Эп шутлама, виçме пĕлместĕп Телее,
Сутма, илме пултармăп Ирĕке.
Телей пуртан куратăп Хĕвеле,
Хĕвел пуртан вулатăп кĕнеке.

* * *

Кĕнекепе хĕвел тан мар текен
Ытла та чухăн, вăйсăр, мĕскĕн...
Пĕлес тесессĕн çут тĕнче çинчен,
Кĕнекесем умне эс пĕшкĕн!

Кĕнекерен килет халь мĕн пурри:
Вăл тенипе шавлать çĕн тинĕс,
Садра янрать саркайăксен юрри,
Хирте тырпул кашлать тип-тикĕс...

Çавр̆анмалла-и Марс тавра вĕçсе,
Çăлтăрсемпе калаçмалла-и,
Пĕлесшĕн-и хăçан çĕр чĕтрессе —
Кĕнекене уçса алла ил.

Ăна çунтарнă инквизиторсем,
Кĕнекене çунтарчĕ Гитлер.
Вутра çунмасть Хĕвелĕм-кĕнекем,
Тăшманĕсем ун çунччăр, вилччĕр!

Кĕнекепе хĕвел — пĕр тăванах,
Вĕсем — этем телейĕ, мулĕ...
Хĕвел çӳлте хăватлă пултăрах,
Эпир çĕрте пулар вутчулĕ!

## ИР ТĂРСАН

Ир тăрсан, иртни çинчен ман шухăш:
Мĕнлерех-ха кунăм, ĕнерхи?
Пылакпа йӳççи мĕнлеччĕ хутăш?
Мĕн каларĕ пурнăç кĕнеки?

Ир тăрсассăн çĕнĕлле куратăп
Таврана, хĕрелнĕ шуçăма...
Эп пĕлетĕп: каç каллех хуратĕ,
Лăпкаса хуптарĕ куçăма.

Ир вăраннă кăвакарчăн тутă.
Ир авланнă ывăл пăсăлман.
Çивĕчрех касать ир пăчкă-туртă,
Пусă шывĕ тăрă ир ăссан...

Çĕн ире курса эп савăнатăп.
Мухтамашкăн ир-ха каçхине.
Эп куратăп: ир вăраннă ватă
Сиктерет мăнукĕн сăпкине.

Вата кӳршӗ каҫранах, тен, пӗлӗ
Ыранхи ҫанталӑка ӑспа.
Кӑпӑклӑ сӗт пек пулинччӗ пӗлӗт,
Ашӑ ҫумӑр ирттӗр касӑпа.

Йӑлкӑшса тухать хӗвел мӑнаҫлӑн,
Ҫупӑрлать мӗнпур ҫӗре, шыва...
Ҫӗнӗ кунпала хамах калаҫнӑн,
Шӑп итлетӗп эп ирхи шава.

Кунӗ хамӑртан килет-и, ҫук-и —
Ӗҫпеле ыр канӑҫ — хамӑртан.
Уҫӑ саслӑн авӑттӑр куккукӗ,
Янраса ан ватӑлтӑр вӑрман!

## ҪУЛ ҪИНЧЕ

Утрӑм-утрӑм — ҫул пӗтмерӗ,
Вӑй кӑна чакать утма.
Тӗрлӗрен каҫми-кӗперӗ,
Тӗрлӗ калаҫать ҫырма...

Тӗрлӗрен хули те ялӗ,
Ҫурчӗ тӗрлӗрен, урам...
Ырӑ ҫын сана хӑналӗ,
Ыйтмӗ: «Ӑҫтисем?» е «Кам?»

Такампа такам паллашӗ
Ҫул ҫӳренӗ вӑхӑтра.
Пул тутар эс е чӑваш-и—
Ырӑ ҫын тупать ырра.

Тутарта ҫуралтӑм эпӗ,
Тав тӑватӑп тутара.
Хусан урлӑ эп ҫитетӗп
Ытарми Шупашкара.

Шупашкарĕ те ман хамăн,
Ют темест мана Хусан.
Аслă çул çинче, чун, савăн,
Атăлпа ишсе хумхан!

Хăвăрт иртрĕ-çке çур ĕмĕр,
Пулĕ утмăл, утнă май.
Çитĕ-ши чĕре вут-хĕмĕ —
Қаласси çынна нумай.

Чаплă та пуян Çĕршывăм!
Çутатать хĕвел çула.
Çул çинче, юлташ, ан ывăн,
Ут, салтак пек, малалла!

## ЙĂЛТĂРККА КĂВАР

Қашниех çут япала
Хаклă ылтăн мар.
Çĕклентерĕ кăмăла
Сарă сăмавар.

Сăмавар тавра ларар,
Тултарар курка.
Пин сăмах та ылтăн мар,
Сахалли — паха.

Пĕтетех-мĕн нумайăи,
Сахалли — çитет.
Хир янравлă пуласси
Пĕрчĕрен килет.

Çумăр пулнă тумламран,
Пĕрчĕрен — пучах.
Ылтăн пĕрчĕ пек ялан
Çиçтерчĕ сăмах.

Ылтăн-кĕмĕллĕ пулма
Çитрĕ пуль сехет —
Аслă Вăхăт пуçăма
Кĕмĕлпе витет.

Каç хĕвелĕн анăçри
Ылтăн пайăрки
Вуламашкăн пултăр-и
Сăввăмсен йĕрки!

Мăлатукпала сунтал
Хĕм кăларнă пек,
Янăра, чĕрем, çутал
Чун хăвачĕпе.

Тутăхсассăн, янрамасть
Хĕлĕхĕ кĕслен.
Сар хĕвел те курăнмасть
Шăн чӳречерен.

Çиçмесен кĕпçе йăл-ял
Тĕл пемест пăшал.
Сăввăм, шăранса çутал.
Тап, чĕрем, кал-кал!

Кашни çутă япала
Ылтăн-кĕмĕл мар —
Чĕрере хĕм сапмалла
Йăлтăркка кăвар!

## ТĂВАН ТАВРАЛĂХĂМ

Кунта çăваççĕ ылтăн çумăрсем
Сар асамат алийĕ витĕр пĕрĕхсе,
Юхаççĕ ылтăн хумлă уй-хирсем,
Кĕр куркине кĕресшĕн чӳхенсе.

Ķаç ылтăн шăрçапа капăрланать,
Юрăсемпе янрать тăван хула.
Тăван хуласăм, пар-ха аллуна!
Эпир пĕр çулхисем-çке санпала!

Эрешлĕ вышка лекнĕ уйăха.
Илтетĕп эп çĕр юнĕн таппине.
Хура пулсан та, ылтăн теççĕ-ха
Тавралăха çутатнă çĕр юнне.

Вăл, чăн та, пулчĕ ылтăн та мерчен —
Пĕр вышка çеç-и-ха миллионер?
Ķунта таçти-таçти çĕршывсенчен
Ķурма килет юлташ та мистер, сэр...

Эп калаçмастăп та çĕр сумпала!
Çĕр тусăмпа эп мухтанатăп — кур.
Пахи, хакли нумай пирте — суйла,
Пире, мăнуксене çитмелĕх пур!

## ЯМШĂК

Ямшăк чупмасассăн та, тăванăм,
Юрататăп ямшăк юррине.
Ахăрса тулаштăр çил-тăманĕ,
Уйăх ан çутаттăр çулсене...

Тухаймастăп эпĕ шăнкăравлă
Пĕкĕ уçнипе умри çула.
Йыхăрмасть мана таçти аваллăх.
Ķилĕшмест чăпта та мунчала...

— Лар килтех. Çула ан тух хĕвелсĕр.
Самолет вĕçмест çак тăманра...
— Ăçталла хĕл кунĕнче вĕçетĕр
— Вышкăсем кĕтеççĕ тайгара!

Тăманран хăрамĕ пирĕн ямшăк.
Çил çĕклет çунатлă кӳмене.
Ик эрне ĕçлетĕп эпĕ хамшăн,
Тăнăçлăхшăн тетĕп пĕр кунне.

Иксĕлми пуянлăхĕ Ямалăн,
Пит пуян иккен Тюмень, Сургут...
Лашапа кайсан, таçта çухалăп,
Ямшăкăм вĕçевçĕ ман, якут.

Тутарстан йĕкĕчĕсем вĕçеççĕ
Нефтьпе газ илмешкĕн çурçĕртен.
Факелсем ялав пек вĕлкĕшеççĕ
Юр чаршавĕ витĕр инçетрен.

## ĔÇÇЫННИ

Виç куна юлать ĕç, теççĕ,
Ĕçлесе вилсен ĕçчен.
Пуçламан ĕçне пĕлмеççĕ —
Вунă çуллăх пулнă, тен?

«Паянхи ĕçе хăвар та —
Ĕç!»— темест ĕçчен чăваш.
Пуçлани пулать хăватлă,
Юлашки юлать каяш.

Қаяшпа кахал килентĕр,
Хăватли вăл — ĕçчене!
Вĕçнĕ чух ӳксе вилмесĕр
Пыл пухмасть хурт вĕллене.

Ĕç вĕçне курма хĕтлан-ха—
Вĕçĕ çук ун курăнма.
Выртакан каска мăкланнă
Атăпа пырса тапма.

Çулакан çава çап-çутă,
Ĕççынни те — çут çава!
Питĕ пулĕ, пулĕ тутă,
Янăратĕ уява!

## КĂМАКА

Кирлĕ эс кашни киле,
Кăмакаçăм-кăмака!
Йышăннă çур тĕпеле,
Тĕреленĕ алăка.

Çулăм хĕртнĕ кирпĕчрен
Купаланă пит ăста.
Кукăль, çăкăр пуличчен
Хăпарать кунта чуста.

Пашкаса пиçет кулач
Питлĕхлĕ кăмакара.
Сивĕ мар хаяр кăрлач—
Юрлаттар сăмавара!

Кăмакан ăшши пулсан,
Чун кĕрет пур кил-çурта.
Пăсланать, вĕрет хуран —
Ăшăрах пулать карта.

Сывă пултăрах ялта
Ватă карчăк-кăмака!
Пăрахса çунтар вута,
Карчăк, çĕтĕк-çурăка!

Выльăхшăн та сивĕре
Ăшă парĕ кăмака.
Сиккелетĕр витере
Путек-сурăх, качака!

Газӗ-пӑсӗ лайӑх та,
Ҫӑмакасӑр япӑх ҫав.
Тавтапуҫ юман вутта,
Ӑвӑс ҫаппине мухтав!

## КАНТӐР ВӐРРИ

— Чи-чи кӑсӑя, ӑста каян, кӑсӑя?
— Ҫантӑр вӑрри вӑрлама...

*(Чӑваш халӑх юрринчен.)*

Акатчӗҫ кантӑр ялсенче.
Ҫантӑр вӑрри пулатчӗ ҫуллӑ,
Мӗн ӗлӗкрен сӗтел ҫинче
Унран апат сахал-и пулнӑ!

Ҫантӑр вӑрри йӗм кӗсйинчен
Ҫайма пӗлмен — ача хаваслӑ!
Темрен те тутлӑрах иккен
Пылпа ӑна чӑмӑртасассӑн.

Юрччен тыллатчӗҫ кантӑра.
Мӗнпе танлашӗ-ха ун сӳсӗ?
Ӑна туранӑ шӑрт, тура —
Вара сӳс темӗн — сар хӗр ҫӳҫӗ.

Ҫухалчӗ кантӑр хирсенчен,
Шӑлт-шалт тумасть ялта пӗр тылӑ.
— Мӗнрен, аннеҫӗм, пир тӗртен?—
Тесе пӗр эпӗ ҫеҫ-и ыйтнӑ...

Ҫирлех пуль пирӗ те пире,
Ҫантӑр вӑрри, кантри-вӗренӗ...
Халь кам, эппин, ялти хӗре
Пир-авӑр тавраш вӗрентӗ?

## КУЯНА ХĂВАЛА...

Ик куян ан хăвала,
Тенине ан шан:
Сан кĕслеçĕ пулмалла,
Чун юрлать пулсан.

Пуртă тыт та аллуна
Çурт тума пултар.
Кирпĕч çап, чуста уна —
Пулĕ пархатар.

Арăм ĕçĕ ку тесе,
Йĕрĕнсе ан кул.
Вĕркĕчне ху вĕртерсе,
Тимĕрçĕ те пул...

Мĕн вара вăл ик куян?..
Виççĕ тыт тăрук.
Пултарулăху санран
Çăкăр ыйтас çук.

## ВĂЙ ПАТĂР

Çын ĕçне курса, вăй патăр, тет чăваш.
Ĕç хĕрӳ чухне çапмасть пуш параппан
Каласма пĕличченех ĕçпе юлташ,
Çурлапа, мăлатукпа вăл пĕртăван.

Аннесем пире çуратнă вырмара.
(Халь асăнатпăр çеç çав тапхăра.)
Иртнĕ нушана пĕлмен яш чăваша
Йыхăрма та намăс вăйăра ташша!

Ĕç çинче вăй пухнă чăваша
Малашне вăй патăр, ырлăх патăрах!
Тихаран курнать, эппин, пулас лаша.
Ĕççĕр каччă...
вată çамрăклах!

* * *

Вĕçмешкĕн кирлĕ-им çунат кăна?..
Çунатсăр вĕçкĕнсем те пит хастар!
Қаçăрăлса пăхаççĕ таврана —
Мухтаннă чух хĕвел те кирлĕ мар!

Хăйсемшĕн çутăрах пек уйăхран.
Çунат çыхса çĕклеймĕн вĕçкĕне:
Çӳлте хăрать вăл пуç çаврăннăран,
Чухлать çĕрте шума çуралнине...

Çунатсăрах вĕçет тепри çӳлте.
Сăпайлăн çеç çӳрет çын хушшинче.
Шăнкрав çакса çӳремесессĕн те,
Янрать ун ячĕ хăйĕнчен инçе.

Мухтавлă ĕçшĕн ячĕ паллă ун.
Қаппайлăхпа ӳсмест вăл халăхра.—
Тухать сар вучахран хура чугун,
Шап-шур кулач парать хура тăпра!

## ÇĂКĂР

Çĕнĕ вăрлăх. Çĕнĕ сорт. Çĕн ят
Хуçалантăр уй-хирте тесен,
Пĕр çул мар, çур ĕмĕре ăсат —
Савăнтăр çĕн тырăпа хресчен!

Вăйлă тырă ӳстĕр вăрлăхран:
Ан хăратăр сивĕрен хĕлле,
Хуçăлса ан ӳктĕр пăр çапсан,
Типĕ шăрăхра та тӳсмелле.

Тутлă пултăр çăкăрĕ çиме,
Қăпăклантăр ĕçнĕ чух сăри.
Ватăлсан та, яш пек çӳреме
Вăй-хăват та сывлăх патăр-и!

Икерчи те пиçтĕр, пашалу,
Пăрçисем исленччĕр яшкара.
Выçăхса курман хĕр-ывăлу
Ан таптатăр татăк çăкăра!

Çумăр тумламне пит юратса
Ӳснĕ пĕрчĕ,
                çăкăр пуличчен.
Қам кăларнă ывăспа тытса
Çăкăра хĕвел кăмакинчен?
Тав сана, ырми-канми хресчен!

## АКАНА ТУХСАН

Қĕркунне ана çине тухаттăн —
Трактор тарăн сухалать çĕре.
Қасăлатчĕ каса картлăн-картлăн,
Сăмала пек хуратса çĕре.

Ĕмĕртен çапла çын сухаланă —
Айăн-çийĕн çавраннă тăпра.
Ваттисен пехилĕ те халалĕ
Чысламашкăн хушнă çăкăра.

Урайне ан ӳктĕр пĕр тĕпренчĕк,
Çăкăра эс ан хăй таптама.
Çын вăй-халĕ, çăкăр — пĕр тĕпрен-тĕк,
Пултаратăп ак мĕн калама:

Çăкăр çуралмасть çын вăй хумасăр,
Çăкăр пулмасан, вăй çук ӳтре.
Çăкăра пит перекетлĕн касăр,
Юратса ачашлăр уй-хире!

Çавăнпа халь акана тухсассăн,
Çавăрса витмеççĕ хăмăла.
Тымара касса иртет халь касă —
Çумăра, юра ун тытмалла.

Тӳпене лексе выртать хĕл умĕн
Симĕс те сап-сар кĕрхи уй-хир.
Ылтăн-кĕмĕл çутçанталăк тумĕ —
Хамăр ял уявĕнчи тумтир.

## ÇУЛ УМĔН

Ларар пăртак инçе çул умĕн,
Арча çине ларар, тăван.
Миçе çĕр çухрăм çума-çумăн
Эпир утман-ши? Шутламан.

Урапапа та, çунапа та
Пĕр ярăнса, пĕр лăсканса
Çӳренĕ, курнă такама та:
Чее юса та чăн туса...,

Пире йĕпетнĕ шалкăм çумăр,
Шăнтасшăн шăхăрнă тăман.
Ӳке-ӳке юр ашнă çулсăр —
Çул хĕррине маяк лартман.

Вар тĕпĕнче уланă кашкăр,
Хартлатнă ывăннă лаша.
Утаттăмăр самант манмасăр
Тăван килти çутта, ăшша.

Арча çине лармасăр тухмăп
Тăван килтен инçе çĕре.
Авланнă çул тумланнă тумăм
Кĕтсе кивелмĕ кĕтесре.

## КАШНИ ЯЛĂН ХĂЙ ИЛЕМĔ

Кашни ялăн хăй илемĕ пур.
Чĕннĕ чух, тăванăм, кайса кур.
Тус-тăвансене савса юрла,
Хăнана чĕн хамăрăн яла.

Кашни ялăн танлă хĕрĕ пур —
Калаçмасăрах хакна ан хур.
Ан хурла эс хамăр хĕрсене —
Ан лартса хăварччăр пăр çине.

Аякка сапмаççĕ çăл шывне,
Ют яла ямаççĕ ятлине.
Куç хывсассăн кӳршĕ ялтине —
Кăтартма пĕл хамăр мĕнлине.

Кӳлсе кай эс çилçунат лаша,
Вичкĕн çилĕ пултăр юлташа.
Çул çине ил икĕ кĕленче,
Пыл та çу пулинччĕ вĕсенче.

Амăшне çемçетĕн сар çупа,
Ашшĕне — вуник çулхи пылпа...
Автансем салатиччен хыпар
Иксĕре те çул курки тултар!

## ТУНСĂХ ВĂХĂТРА

Хамăр ялăн анлă урамне
Урлă-пирлĕ каçăп, курăп-ха.
Мухтăп çĕнĕ, çутă çуртсене,
Çĕмĕрте эп кайăп улăха.

Кăмăсран уйăрайми уйран,
Курăкран вĕретнĕ симĕс чей
Сулхăнра ĕçме умра пулсан,
Маншăн çавă пулĕ чăн телей!

Кăмăл туличчен пĕр калаçма
Пĕлĕш-тантăшсем пулни паха.
Çамрăк вăхăт килĕ асăма.
Туссемпе эп манăп ватлăха.

Тăвана курни мĕне тăрать!
Юрăпа сăмахĕ — пыл тути.
Чунăм тунсăхланă вăхăтра
Çул кăтарттăр хамăр ял çути!

## ХĂНА КИЛСЕН

*«Улăхра та хăва кăна,*
*Эпир кунта хăна кăна—*
*Нумаях та тăмăпăр —*
*кайăпăр...»*

*(Халăх юрринчен.)*

Мĕн калаçать-ши улăхри хăва,
Шăпăртатса пăхкаласа шыва?
Çăлкуç шарлать те,
шăп юхать çырма,
Шыв юхăмне часах пулмасть чарма.

Хăнасемпе ларса калаçнă чух
Юхсамччĕ, юрă.
Ял çырми пек юх!
Хăнамăрсем те чыслă-çке ытла,
Курмашкăн килнĕ хамăрăн яла.

Хăнасене нумай кăтартмалли,
Унран ытла нумай калаçмалли.
Пĕрре курни пырайтăр ĕмĕре,
Пĕр калаçни вырнаçтăр чĕрере.

## ЯЛТА СУЕÇĔСĔР КИЧЕМ

Çилпе çӳрет ялта сăмах,
Кусса çӳрет сăмах çăмхи:
Пĕри пĕçернĕ, тет, çăмах,
Теприн çухалнă, тет, чăххи...

Сăмах çумне сăмах хушсан,
Хайхи сăмах пулать така.
Яла пĕр-иккĕ çаврăнсан,
Кăркка тăваççĕ леш чăхха...

Ялта суеҫёсĕр кичем!
Ҫирлех-ҫке кулăш кустáрми.
Ҫулма мансан ял ҫыннисем,
Тек шăнкăртатмĕ ял ҫырми.

Шыв сыпнă пек ҫӳре-ҫӳре
Ан кӳрентерĕр урама.
Сăмах-юмах кирлех пире
Чиперрĕн калаҫса кулма!

## ЯЛТАН ЯЛА ЧУПМА...

Хапха умне туй кĕрлесе ҫитсен,
Тинех ҫакмаҫҫĕ пуль туй яшкине.
Ҫуллах шутланă ҫын ҫуна ҫинчен,
Хĕлле майланă вăл урапине.

Хăй вăхăтне пĕлсе пиҫет ҫырла,
Вăхăтĕнче шăркаланать ыраш.
Ҫумне ҫава хурса, инҫе ҫула
Урапапа тухмасть паян чăваш.

Хуп урапан, тен, вăхăчĕ иртнех?
Тен, кирлĕ мар пуль ĕнтĕ тăрантас?..
Ял ҫумĕпе пĕр явăнса иртме
Машинăм ҫук тесе-и вăтанас?

Яка ҫулпа чупма ялтан яла
Паян та ырă тăрантас, ҫуна!
Хăяккăнах ларса, кула-кула
Килсе кĕринччĕ хапхаран хăна!

## ТУХТĂРА

Чире сиссен, паян чăваш
Вĕрмест, сурмасть, чĕнмест турра.
Тухтăрсенчен ыйтать канаш,
Килнех чĕнет вăл тухтăра.

Хисеплĕ тухтăр! Эп ниçта
Илтмен унран та ырă ят.
Пĕтет-и хал çурма çулта,
Ăша анмасть-и шыв, апат...

Е вăрçă хирĕнчи суран
Çынна ӳкернĕ ураран —
Вăл сывалать паян-ыран —
Умра ыр тухтăр пулнăран.

Шăнсан, парать вĕри юнне,
Эс çуннă чух вăл пулĕ пăр.
Тăванăм! Тухтăр пур чухне
Пĕр выльăпăр та кулăпăр!..

Ырлатăп тухтăр пулакан
Йăмăксене, шăллăмсене.
Мухтатăп икçĕр çул таран
Хăват пуçтарнă çынсене!

## ЮРĂ

Аллуна сулса юрла, анне,
Юрласам, атте, ура тапса.
Эсирех мĕнле юрланине
Юрăпах-çке илĕпĕр аса.

Сĕр, аннеçĕм, кăпăклă сăра,
Аттепе ĕçсемĕр шаклатса.
Эсирех те тытнă куркăра
Усрăпăр ялан та чысласа.

Ĕçлесе пит ан ĕшен, атте,
Ыр аннемĕр, йывăр ан çĕкле.
Сирĕн халĕ хамăрăн килте
Мăнуксем тытса сиктермелле.

Эсирех юрланă юрăпа
Ӳсрĕмĕр, тавах, атте-анне,
Пирĕн ачасем те ырăпа
Асăнĕç-ши ырă тунине?..

## КĔВĔÇМЕСТĔП

Кӳршĕ пуяннишĕн кĕвĕçместĕп.
Хам телейĕм хамшăн чух кăна.
Çыннăн куркине ыйтса ĕçместĕп,
Хăй килсе куринччĕ хăнана.

Пурлăха тумарăм аслă гурă.
Пуççапмарăм эпĕ те мула.
Çăкăра ытлашшипе ан турăр —
Пурнăç йăлт виçеллĕ пулмалла.

Виçерен иртмесĕр пуяннишĕн
Савăнатăп хамăрпа, тăван!
Ан кулян килте пурри-çуккишĕн,
Сутăнман таваршăн çеç кулян.

Сутуçсен алкийĕ ылтăн пултăр,
Пĕлтермест вăл çын хăй ылтăнне.
Арласа тăвать тем чухлĕ хутăр,
Ылтăн алăллă ман асанне.

 Япалашăн, тĕрлĕ пуршăн-çукшăн
Пуççапмастăп эпĕ сутуçа.
Çук паян. Ыран туянăп пурçăн —
Хăй хакне çухатмĕ-ха укçа.

Чыс çухатнă сутуçа ан шеллĕр.
Сутăн туянаймĕ вăл чыса.
Ылтăнĕ, кавирĕ, мамăк шалĕ
Намăса витеймĕ хупласа.

Çыннăн кĕсйине кĕрсе пуйни вăл
Ĕмĕре пымасть, хыпса çунать.
Аттерен юлни ман пултăр кивĕ —
Асăнсан, савăнтарать чуна.

Хăйĕн чунĕнче-çке çыннăн мулĕ,
Хăйĕн хакĕ, чапĕ — çын хăех!
Ырă çын кайсассăн — ячĕ юлĕ,
Усалли кайсассăн — ырлăх пулатех.

## ВУНСАККĂРТА

Вунсаккăрта савма пĕлеççĕ,
Телей ташлать элем-селем.
Хĕрсем çырла пек хĕрелеççĕ,
Кçăрăлаççĕ каччăсем.

Кулсассăн,
çăлтăра сӳнтерĕç.
Çиçтерĕç çиçĕм,
ташласан.
Шур пĕлĕт —
уйăхăн минтерĕ
Эрешленсе çиçет каçран.

Вунсаккăрта каçсем илемлĕ,
Урам янравлă çуркунне.
Çут çăлтăрсем тӳпе силлемĕ
Ялан-ялан пуçу çине.

Вунсаккăрта чĕре — вут-çулăм,
Хĕр чĕрине çеç ан çунтар!
Куççуль курсан, мĕнле-ха кулăн?
Суран çине ан сап тăвар.

Вунсаккăрта чĕре —
йĕс хĕлĕх,
Кĕсле пекех янрать чĕре.
Чипер хĕрсем ялта,
тен, хĕрĕх —
Ма чун çунтармăшĕ —
пĕрре?..

Вунсаккăрта ма шуçăм çутă,
Çурхи каçсем-çĕрсем кĕске?
Ах, юрату та, çухату та
Юнашарах çӳреççĕ-çке...

Вунсаккăрта телей шутлаççĕ,
Чĕре çине ӳкет хĕлхем.
Хĕрсем шур акăш пек утаççĕ,
Сиксе ташлаççĕ каччисем!

## ХĔРСЕМ

Йăл-йăл çиçсе хĕрсем иртеççĕ,
Çил сĕртĕнме хăймасть пуль, тен.
Нимле парне, пĕр кучченеç те
Хăйса ан ыйт чипер хĕртен:

Пĕрре пăхсан —
ахах парнелĕ,
Чунна илет тепре пăхсан...
Хăвачĕ çук нимле эмелĕн
Каччa çăлма çак асапран.

Пултарнă çавă çутçанталăк
Савнисене илем пама.
Ялан çапла тĕнче çуталĕ,
Ырри ун çитĕ хуть кама!

**ЫРĂ КУР**

Юратун пуçламăшĕ пулсан,
Вĕçленме те çитĕ-ши сехет?
Ирхине кулса хĕвел тухсан,
Каçхине вăл хĕмленсе сÿнет.

Юрату та хĕвелпе пĕрех:
Тухăçĕ те, анăçĕ те пур.
Пĕлĕт куписем ан килччĕрех,
Юратсассăн, ĕмĕр ырă кур!

**АСĂНМАЛĂХ ЧУПТУ**

Хура тинĕс пуçлать хумханма,
Шур çунат пек хумсем çĕкленеççĕ.
Кăпăкланнă кăвак урхамах
Çилхине вĕçтерсе кĕçенесшĕн.

Тулхăрса тапăнать çырана,
Çут мерчен сапалать чăлтăр-чăлтăр.
Çилленет-ши вăл çилсĕр куна?
Çырана ыталасшăн-и харсăр?

Ассăн-ассăн сывлать чул çыран,
Тапхăр-тапхăр кулать вăл хаваслăн:
«Асăнмалăх чупту, пултарсан!
Техĕмне туймасассăн — ан хапсăн!..»

## КУРАС КИЛЕТ

Аякри те çывхарать,
Çывăхри те инçелет...
Пĕрешкел йăлăхтарать,
Тĕрлине курас килет.
Курнă чух курса юлас,
Хамăр кăтартма пĕлес.
Пĕр кайсан, килместпĕр час,
Ĕмĕр икĕ хут килмест.
Пĕр атте те пĕр анне
Панă пĕр чĕре сана.
Ма çитмест-ши этеме
Пĕр çын юратни кăна?

## ЮРАТУПА КӰЛЕШӰ

Юратусем сӳнеççĕ, çăлтăр пек.
Çĕр пек телейлĕ çăлтăрсем сайра.
Хĕвел савать ăна, сапать чечек,
Ан ватăлтăр, тет, ăшă ытамра.
Ир ватăлнă та,
уйăх кӳлешет, —
Вăл çĕрĕпе çĕр хыççăн йĕр йĕрлет...
Юратнă чух этем чечекленет.
Савсассăн,
кӳлешни те
килĕшет.

## ПУЛАСЧĔ САРКАЙĂК

Тен, эс çумранах иртсе кайрăн?
Санпа, тен, эп пулнă çумлах?
Таçта васкаса утнă майăн
Пĕри те чĕнмен пĕр сăмах.

Чĕнмешкĕн çитмен-и хăюлăх,
Çул урлă-и каçнă кушак?..
Хыçа çухалса тăрса юлнă
Эпир пĕрлешес пĕр сукмак.

Пĕрле пулманни лайăха-ши,
Ялан ӳкĕнме пулĕ-ши?..
Çаплах илĕртет-ха çу каçĕ,
Хаваслă яш-кĕрĕм таşши.

Эс хирĕç тухсан, иртсе каймăп,
Куç хĕсĕп те лартăп çума.
Пуласчĕ хăш чух сарă кайăк
Сăмахсăр савса калаçма.

## СĂМАХ

Калас пулмастчĕ сан çак сăмахна.
Пĕр сăмаху йăлт ишрĕ кĕпере.
Хушшăмăрти ик чăнкă çырана
Пĕрлештерме халь ним çук тĕнчере.

Ватаççĕ пуртăпа чула, тăва.
Чуна касать сăмах пĕр туххăмра.
Вăл хуратать таса юратăва,
Тăвать вăл ылтăн тутăх пăхăра.

Сăмах тухать иккен вăл чĕлхерен,
Хĕç витеймен сăмах тăрать
сaспаллинчен
Чĕлхеçĕм палкамашкăн кĕçĕтсен,
Пуçа чиксе, шăла çыртас иккен!

## ТАНТĂШĂМСЕНЕ

Эпир пĕрле вĕрентĕмĕр,
Ӳссе çитсе, салантăмăр.
Пĕрлешĕç-и çулсем?
Пĕрле шкула кĕреттĕмĕр,
Пĕр алăкран тухаттăмăр.
Пире пулман кичем.

Вăрçа кĕрсе, кĕрешрĕмĕр,
Юлташсене çухатрăмăр —
Çурри килмен киле.
Хуллен-хуллен иртет ĕмĕр,
Ҫăвакарать çунатăмăр.
Яла вĕçес килет.

Эпир, туссем, çунатлă-ха.
Аса илет пуль шкулăмăр,
Кĕтет пуль хамăра.
Пĕрле пулса самантлăха,
Ҫаллех ача пек кулăпăр,
Янратăпăр юрра!

## ЮРĂПА ЮМАХ

Тĕлĕнмелли нумай-çке таврара!
Юратрăм эпĕ юмахпа юрра.
Юмахĕ асилтерĕ хĕллене,
Юрри умна кăларĕ çу кунне.

Çил-тăманра пит килĕшнĕ пире
Кăмакаçи те сарлака сентре.
Хуран айне чун кĕртсенех вучах,
Çăвар карса итлеттĕмĕр юмах.

Вăрманччĕ пирĕн савнă кил çулла,
Карти-карти хĕрелнĕ чух çырла.
Саркайăк кĕввине итле-итле,
Такам калатчĕ пек пин-пин кĕсле.

Эп тĕлĕнеттĕм çын юрланинчен...
Мĕскер вăл юрăпа юмах тесен,
Калаттăм:— Юрă вăл —
асамлă çу,
Юмахĕ — хĕллехи тăманлă çул.

## АСĂНМАЛĂХ

Каçхи тӳпе чуптурĕ тинĕсе,
Инçе-инçе вылярĕ çут шăрçа.
Каякансем: «Татах килер!»— тесе,
Хумсем çине пăрахрĕç вак укçа.

Памаççĕ таварса хумсем пĕр пус,
Шап-шур калпаклă шыв сутуçĕ пек.
Хум хыççăн хум кустар-ха, тинĕс тус,
Ахах чулна пуçтарăп пĕр чӳлмек.

Эп асăнмалăх шыв тултарăп чӳлмеке,
Туянăп тинĕс ракĕн хуранне.
Парнесене хурсассăн çӳлĕке,
Илтейĕп тинĕс хаш! сывланине.

## АЯКРАН ПĂХСАН

Ҫаллех каç пулчĕ, лăпкă кăнтăр каçĕ.
Цикадăсем садра чăрăлтатаççĕ.
Хум шавĕ илтĕнет кунта татах.
Пĕлĕтсене тытасшăн Ҫара-Даг.

Ача куççулĕнчен те тăрă тинĕс
Шапăртатса çăвать вак-вак чула.
Хумсем çине выртса кансассăн тин эс
Ҫаллех хăвна туятăн çамрăкла.

Çапах килех туртать тăван кĕтесĕм.
Иртес килет йăмралла урампа.
Çăл шывĕпе килет ман чӳхенессĕм,
Хурăнлăхра халь шырăттăм кăмпа.

Ҫăнтăралла çитсе, шыва кĕрем-и,
Сипетлĕ шыв юхать-и мăй таран...
Асран каймасть тăван вăрман илемĕ —
Темрен те чаплă аякран пăхсан.

## ШЕЛЛЕТĔП

Шеллетĕп эп ача макăрнине.
Ăна такам хăратнă, кӳрентернĕ,
Тен, кӳмине çул хĕррине тӳнтернĕ,
Тен, çил тусанĕ кĕнĕ пуль куçне...

Курак чĕппи ўксессĕн йăваран
Шеллетĕп. Хураскер те пуранасшăн!
Вăл савăнмасть-им, амăшĕ пулсассăн,
Шур пĕлĕт айĕнче йăва пулсан?..

Шеллетĕп эпĕ хуçăк хурăна —
Хăрса вăл типĕ, пулмĕ ярапаллă.
Çапла салтак алли-ури çухалнă —
Вăрçа кайса çухатнă вăл ăна.

Шеллетĕп эп пĕччен хĕрарăма —
Пулнах-и упăшки, пулман-и — пурпĕр.
Хул урлă уртса янă пурçăн тутăр
Ăшăтаймасть пуль çав çанçурăма...

Шеллетĕп эпĕ иртнĕ пурнăçа,
Пĕлсех те пурăнманшăн кулянатăп.
Хыçа пăхатăп та мала каятăп —
Усас килмест-ха утмăлти пуçа.

Хама эп шеллеместĕп — мăшăра...
Ăна хăш чух, тен, йăнăш кўрентернĕ,
Çула тухма чуман лаша кўлтернĕ
Хĕлле, тăман вĕçтернĕ вăхăтра?..

## ЯЛАНАХ АСРА

Пултăм ĕнтĕ кукаçи,
Тĕтреленчĕç куçăмсем.
Ватăлсан та, мĕншĕн-ши
Асăмран каймасть аннем?

Хĕрĕх çул кĕни çĕре.
Ват юман та тайăлать.
Ĕмĕр иртĕ. Чĕрере
Хамăрпах анне юлать.

## ЯЛ КУРАКĔ

Ял куракне ютра курсан,
Тăван пек, уншăн савăнан.
Хура курак килсен яла,
Ăна таçта ан хăвала.

Йăмра çинчи хăй йăвине
Килсе çĕнеттĕр çуркунне.
Каймашкăн вăхăчĕ çитсен,
Вăл вăрттăн макăрать пуль, тен.

Хура куракăн та чĕри
Чĕппишĕн çывăх та вĕри.
Ачисене ӳстериччен
Канма пĕлмест иртен каçчен.

Йăмралăхри курак туйне
Саватăп эпĕ çуркунне,
Кисрентерсе кĕперсене
Çурхи шывсем шавланине...

Тăван ялна, курак, каллех
Çуркуннепе пĕрле килех!
Йăмра çинче эс кăр та кар,
Çурхи хăна пек, сасă пар!

## ПУЙĂССЕМ ИРТЕÇÇĔ

Çăлтăрсем шăнаççĕ тӳпере,
Чĕтресе çунаççĕ, час сӳнессĕн.
Ман тавра вăрман шăп тĕлĕкре,
Вăрăм мĕлкисем çĕре ӳкеççĕ.

Çӗр чӗтрет. Иртеççӗ пуйӑссем.
Тӑпӑрт-тӑпӑрт турӗ тимӗр çулӗ.
Ӑçталла каяççӗ-ши?..
Камсем?..
Каясси вӗсен тата мӗн чухлӗ?..

Кашниннех хӑй ӗмӗчӗ, нуши —
Хӑшпӗри, тен, хӗсӗннӗ билетсӗр?
Килӗшет пӗрне Ташкент ӑшши,
Çурçӗре теприн çитес килет-тӗр...

Умрисем иртеççӗ хыçала.
Вакунсен сасси пӗр — тӗпӗрт-тӗпӗрт...
Асӑнӗç тӑван хирти çула,
Манӑçмӗ шап-шур çеçкеллӗ çӗмӗрт...

Кайнӑçем аса килет иртни —
Начарри çеç ырӑ пек ан юлтӑр.
Пуйӑса мӗн çӑлтӑрсем шӑнни?
Станцисен çути пур йӑлтӑр-йӑлтӑр.

Иртӗ пуйӑс вӗçӗмрен çапла,
Вӑл сана,
мана та лартса кайӗ.
Умрисем юлаççӗ хыçала —
Çӑлтӑрсем кӑна çӳлте юлайӗç.

## ХУРКАЙӐКСЕМ

Шур пӗлӗт витӗр, шыв-шыв урлӑ,
Çунатсене сула-сула,
Карталанса иртеççӗ хурлӑн
Хуркайӑксем кӑнтӑралла,

Чĕпписене чипер ӳстернĕ,
Вĕрентнĕ акăш таршине.
Тек ашшĕ-амăшне кĕттермĕ,
Хĕр-каччă тупĕ мăшăрне.

Карталанса ташлаччăр-и-пĕр,
Шур акăшсем ташлană пек.
Вăхăтĕнче ташланă эпĕр
Кас-кас йăмра кашланипе.

Чун юратни пуртан юрлана,
Вăл çуккипе чун çуннăран...
Çамрăксене телей йăранĕ
Пехиллемешкĕн те манман.

Хуркайăк пек вĕçсе кайма та,
Тен, вăхăт çитнĕ кĕр енне.
Çапах пулас килмест-ха вата
Тăван, юлташ нумай чухне.

Пире шăварнă сиплĕ çумăр
Вăй патăрах çĕн хунава.
Аçа çапса сив пăр ан çутăр
Саркайăк тунă чух йăва.

Хуркайăк картисем пек иртĕç
Кунсем, çулсем кĕр еннелле.
Ешертĕрех вăрманĕ, хирĕ,
Кĕтсе татах çитес хĕле.

## КĔРКУННЕ

Ушкăнпа татас çырла вăййисене
Пĕр кĕтмен çĕртен саратрĕ Кĕркунне.
Юнашар тăрса мăн кĕреке умне,
Тав туса юрларĕ маншăн Кĕр-анне.

Эпирех утса çутатнă çулсене
Пĕр сисмен çĕртен хуратрĕ Кĕркунне.
Йывăр аллине хурса ман хул çине,
Кĕр-анне тумлатрĕ çутă куççульне.

Çĕн çынна пĕркенчĕк витнĕн тĕпелте,
Пĕлĕтсем пытарчĕç сарă хĕвеле.
Çулĕ хуралсан та, юлĕ-ха çерем.
Кĕр-анне йĕрсен те, йĕрес çук чĕрем.

Кĕрӳпе хĕр кунĕ — кĕркунне тени,
Ватлăх çывхарсассăн, мăнуксем пулни...
Хĕл-анне те çитĕ,
çитĕ çăварни —
Мăн çула тухмашкăн пултăрччĕ çуни!

## ХУРЛАНМАСТĂП

— Эс чикан урапинчен
Юлнă пуль ӳксе, ачам?—
Тĕлĕнсе хура ӳтрен
Йăл кулатчĕ мăнаккам.

— Çĕр юратнă хурана,—
Тетчĕ кăшт ларсан-ларсан.—
Пӳрт тĕпне те каштана
Авалтан пырать юман...

Ӳт хуришĕн хурланман
Пĕр чăваш та, пĕр чикан,
Хĕвеле пуç тайнăран,
Ирĕке юратнăран.

Ӳтĕм шап-шурă пулма
Тĕпсакайĕнче пулман.
Çĕмĕрт тĕслĕ сăнăма
Илтĕм сарă хĕвелтен!

## ЫЙХĂ ТĂМАНИ

Куç хупанки çине ларатчĕ ыйхă тăмани.
Умри яшка çинех пуç усăнатчĕ.
Аннешĕн паллăччĕ каçчен эп çил хăвалани,
Çини те кишĕрпе пĕр-ик хăярччĕ.

Тӳснех вĕт-ха. Уçланкăра çитернĕ эп лаша.
Пĕччен те мар. Ача-пăча пĕр ушкăн.
Ая сăхман хурса, утланнă шурă Лавруша —
Лаши тахçан-тăр пулнă-мĕн Лаврушăн.

Чупса, лаша çинчен ӳксе юлман ача-пăча.
Тӳнсе каять, куçран пăхсассăн ыйхă.
Юмах та илтĕнмест. Вăратаймасть ăна мунча.
Пуç айĕнче лаша йĕвенĕ — çыхă.

Қаç-каç вĕçсе килинччĕ халĕ ыйхă тăмани!
Ватăласпа вăрманалла-и тарчĕ...
Сайра курнать ача-пăча лаша йĕнерлени —
Ман чĕрене çак шухăш ыраттарчĕ.

## УЙРАН

Шурă кăпăклă сĕт шăршине
Ачаран вĕрентĕм уйăрма.
Пăрлă нӳхрепри чӳлмексене
Пухăнатчĕ çăп-çăра хăйма.

Ачасем ĕçеççĕ те сĕте —
Юрататăп эпĕ уйрана.
Пăслă мунчаран тухсан, килте
Уйранпа пит лайăх уйлама.

Ĕшенетĕн çилсĕр шăрăхра,
Кĕтӳпе пĕрле çӳренĕ пек.
Нӳхрепе кĕрсе ларма вара
Ху та пулăттăн-и тăм чӳлмек...

Чăмăттăн-и тарăн пĕвене
Мунчара çĕн милĕк хĕртнипе.
Ашалана çăмарта пек хĕвеле
Шыв çине пăрахнă, ав, тӳпе.

Куркапа тытсассăн уйрана,
Сар хĕвел хăй сикĕ куркана.
Савăнатăп нӳхрепри уйран
Туй шерпечĕ пек туйăннăран!

## МАТРӲШКЕ ЧЕЙĔ

Утă вăхăчĕ. Кун янкăр,
Саплăксăр сенкер тӳпе.
Янраса тăрать уçланкă
Çавасем чашлатнипе.

Хурăн тăршшĕпе чупаççĕ
Кăткăсем ик çулпала.
Сĕм вăрманăн тимĕрç лаçĕ,
Янратать, ав, сунтала.

Матрӳшке пиçсе вĕрерĕ —
Вăрманти чи тутлă чей.
Пыллаca ларса ĕçер-и
Пĕтĕм кăмăл туличчен!

Ĕшенсе канма выртсассăн,
Илтĕн çĕр сывланине.
Çăлтăр çумăр пек çăвассăн
Туйăнĕ вăрман çине.

Милĕкпе эс улăштарăн
Минтере те тӳшеке.
Матрӳшке каллех тултарăн
Тĕтĕмленнĕ чейнике.

## ЛАЙĂХРАХ ПĔЛЕС ТЕСЕН...

Эс лайăхрах пĕлес тесен хăвна,
Çын куçĕпе пăхса, вăрах сăна.

Ав, мĕнлерех иккен утту-юртту,
Ав, еплерех кулать иккен туту,
Ав, еплерех ĕçетĕн те çиен —
Çын куçĕпе йăлт урăхла иккен...

Куратăн эс çын куçĕнчи çӳпе —
Ху куçунти пĕренене туйман.
Ӳсĕррине курсам çын куçĕпе:
Мĕн калăттăн хăвна хăвах курсан?..

Çын хăлхипе итле хăв сассуна
(Ача-пăча чупать юнашарах!)
Çумкурăкĕ йăлт пуснăн пахчуна,
Сăмахсерен тухать усал сăмах...

Эс лайăхрах курас тесен хăвна,
Ан шан ултавлă, чĕмсĕр тĕкĕре.
Çын куçĕпе хăвна курса сăна,
Сăнанă пек хăв тиркекен хĕре.

## МУНЧАРА

Мунчара ларать мучи.
Куркапа парсан ăшши,

Такмаклать, ташлать çĕн милĕк:
«Ӳт-тирте ан юлтăр кирĕк!
Имçамран чи лайăххи —
Симĕс хурăн кăчăки!
Юрататăп пĕтнĕке,
Хутăш пултăр матрӳшке!..»

Такмаклать, ташлать çĕн милĕк
Тав куркилĕх, туй куркилĕх:
«Ĕмĕр тăрă пултăр-и
Çăвăнмашкăн кĕл тăрри!
Мунчаран сиксе тухсан,
Сивĕ пултăр йӳç уйран!»

Пăсланса тухать мучи,
Ҫалăн вăл пуса каччи:
Ыратмасть халь çурăм, пилĕк.
Сывă пултăр çĕнĕ милĕк!

## ТĂВАНЛĂХ

*(Поэма)*

*Романова Натюк аппана*

Куç умĕнче эс сарă тутăрпа,
Чăпар кĕпе çинчен — шур чĕрçитти.
Нумай пулать сана курни, аппа,
Хăнашăн ырă чун, чĕлхе ăсти.

Пĕркеленме пуçланăччĕ туту,
Тахçантанпа пыла вăл тутанман.
Ытла салхуччĕ çамрăк вăхăту,
Сан мăшăру килмерĕ вăрçăран.

Пĕртен-пĕр ывăл кайрĕ çавăнта,
Вут-çулăма вăл сикрĕ çамрăкла.
Аса илер-ха иртнĕ вăхăта.
Эп саншăн хам калаçăп. Эс тăнла.

* * *

Пит хĕрӳ пуçланчĕ вăрçă,
Хĕрӳрен хĕрӳ.
Хурлăн илтĕнсе пĕр тăчĕ
Ахлату, йĕрӳ.

Кулине аппан кил-çурчĕ,
Улт кĕтеслĕ çурт,

Тăлăххăн пушанчĕ юлчĕ —
Пĕр арçын та çук.

Қатара янратчĕ пуртă,
Вăрманта — çава.
Хатĕрлетчĕç вутă, утă
Ашшĕпе Лява.

Қанашлатчĕ каç, ĕç хыççăн.
Апатра çемье.
Пурăнма аванччĕ виççĕн,
Çăмăл ĕçлеме.

Хытă хуйхăрчĕ хĕрарăм
Килĕ кичемрен.
Тем çухатнăн, тем шыранăн
Тарăхрĕ куллен.

Пит нумай-и, тен, сахал-и
Пурăнчĕ çапла —
Лавсенчен тем чухлĕ халăх
Тăкăнчĕ яла.

Темĕн чухлĕ халăх килчĕ
Хамăр Чăваша.
Тĕрлĕ сăн та, тĕрлĕ çынччĕ —
Пĕр асап, нуша.

Вăрçăран хăпса килсессĕн,
Çăмăл-и сынна?
Çук халь ун тăван кĕтесĕ,
Мĕн пур ырана?

Çырмисем юнпа хĕрелнĕ,
Тутăхнă çерем.
Анасем çинче çӳремĕ
Юрласа этем.

Вăрçă хирĕ, çунăк хирĕ —
Вăл çуралнă ен.
Ăшă çумăр, лăпкă çилĕ
Килмĕ вăл енчен.

Вăл енчен вĕçсе час çитмĕ
Виç кĕтеслĕ хут.
Çĕр çинче çулсем çĕр çитмĕл —
Пĕринпе эс ут.
Чăвашсем патне çитерчĕ
Çул сана паян.
Çисе юл пур чух икерчĕ,
Кур ĕçсе уйран...

Мунчине чăвашăнне кĕр,
Чӳхенме — çырма.
Кăпăклă сăра ĕçмесĕр
Выртмăн çывăрма.
Хваттере аппаçăм кĕртрĕ
Кăмăллăн, туллин —
Ывăлĕ те пĕчĕк хĕрĕ
Пур Мускав майрин.

Упăшкийĕ вăрçăра-мĕн
(Пурте вăрçăра!) —
Арçынна таçта шырамăн
Вутлă вăхăтра.
Çиччĕре ачи, Илюшĕ.
Хĕрачи — Евлен.
Пурнăçĕ пулсан та йӳçĕ,
Ӳсĕç майĕпен.

Выльăх-чĕрлĕхĕ сыв пултăр,
Чăххисем, ĕне.
Аппăш ирлĕ-каçлă сутăр
Кăпăклă сĕтне.

Тӳснӗ-ҫке ялти хӗрарӑм
Хурапа шурра.
Тӗнчене чупса пӗр ҫаврӑн —
Ун пекки сайра.

Пур ӗҫе, тытсан, пултарӗ
Ҫулине аппа.
Ывӑнни те тар тӑварӗ
Курӑнмӗ каҫпа.

Ялкӑшӗ чӗре кӑварӗ
Ҫӑлтӑр пек таса,
Ырӑ туйӑм ҫеҫ хӑварӗ
Калаҫса, кулса.

Выльӑхӗ те унӑн самӑр,
Чейӗ пур сӗтпе.
Пур енчен тытса кур, ҫавӑр—
Ҫӗтӗк мар кӗпе.

Майрапа пит килӗштерчӗ
Пирӗн Ҫулине.
Йывӑр мар-мӗн пурнӑҫ терчӗ
Туслӑх пур чухне.

Илюшпа Евлен пӗлеҫҫӗ
Халӗ чӑвашла.
Вӑрманта пиҫет пилешӗ,
Тӗрлӗрен ҫырла...

Улӑхри колхоз утарӗ,
Анкарти, йӗтем...
Ӑҫта ҫеҫ ҫитсе курмарӗ
Пӗчӗкҫӗ этем!

Аппӑшпе ырма пӗлмесӗр
Тек ҫӳрет Илле.

Шăрăхра пиçет кĕпесĕр,
Хĕрелет хĕлле.

Мĕнлерех ӳсет-ха тулă,
Ҫупăста, пăрçа...—
Хăй акса, пухса хăй курнăн,
Йăлт пĕлет ача.

Ушкăнта выртма çӳренĕ,
Пулнă ун лаша.
Мăн çынла сӳре сӳренĕ —
Ҫурăр Илюша!

Ак çапла ĕçпе ӳсетĕн
Халăхпа пĕрле.
Чăвашла юрра вĕрентĕн,
Юмахне итле.

Сиввине те курнă, тӳснĕ
Авăн çапнă чух.
Юрлă-пăрлă — ернĕ ӳслĕк.
Имлеме пыл çук.

Чирĕ килнĕ те çухалнă,
Пăрăнман Илле.
Ӳснĕ пĕчĕкрен вăй-халлă
Туссемпе пĕрле.

Вăрçăра пуç хучĕ ашшĕ,
Йывăр-çке хуйхи.
Мĕншĕнех çапла пулать-ши—
Хĕн атте çукки!

Хĕн атте çукки ачашăн,
Амăшшĕн татах.
Ма телейĕ çук салтакăн?
Ма вилет салтак?..

Йывăр пулчĕ пур çемьешĕн,
Кулине аппам!
Чĕрери хуйха илмешкĕн
Тупăттăн имçам...

Ăçтарах ăна тупайăн,
Çук ун пек эмел!
Хуйхă-суйхă пит нумай-мĕн —
Пĕрре çеç хĕвел!

Пĕр-пĕрне тӳссе йăпатрăр
Туслă-тăванла.
Çавăнпа кăна сăмахсăр
Ӳтрăр тăвалла.

Пурăнтăр тăват çулталăк
Ăшă йăвара.
Çăкăрĕ пулсан пĕр татăк,
Çитнĕ пурсăра.

Кĕтнĕ Çĕнтерӳ çитсессĕн,
Чи телейлĕ кун,
Хурланса ыратрĕ темшĕн
Упăшкасăр чун.

Çитрĕ уйрăлу саманчĕ
Ик хĕрарăма.
Тепĕр хут чĕре аманчĕ —
Йывăр уйрăлма.

Çăмăл-им-ха уйрăлмашкăн
Пĕчĕккисене?
Вăрттăн-вăрттăн макăрмашкăн
Вăхăт вĕсене...

Уйрӑлчӗҫ. Хашкарӗ пуйӑс,
Ҫайрӗ Мускава.
Мускава ҫитсессӗн, курӗҫ
Аслӑ уява.

* * *

Татах та пулчӗ савӑнӑҫ, аппа,
Ҫуҫҫуллентерчӗ кӗтнӗ тӗлпулу.
Кӗҫ таврӑнчӗ киле чыс-мухтавпа
Ик хут аманнӑ паттӑр ывӑлу.

Бригадирта ӗҫлерӗ колхозра.
Авлантарса, туй турӑр чӑвашла.
Ҫул иртнӗҫем усратӑн эс асра.
Савса ӳстернӗ тепӗр ывӑла.

Илле!.. Мускав ачи ӑҫта-ши халь?
Манман-и вӑл ялти ачалӑха?
Чӑваш ҫӗршывӗнчи хӗрарӑма
Аппа тесе, манмасть-ши асӑнма?

Манмасть иккен! Ҫыру ҫырать куллен.
Ӳкерчӗкрен паллаймӑн халь ӑна.
«Аппаҫӑм,— тет,— мӗнпур ҫемьепелен
Сире кӗтетпӗр. Килӗр хӑнана!»

Хӑвах кала, аппа, малаллине,
Хӑв Мускава кайни ҫинчен кала.
Ун пек телей пӳрмест-ха кашнине —
Тавах ачу манманшӑн чӑвашла!

* * *

Савӑнтӑм ача-пӑча пек,
Ҫул ҫине тухма.
Аякри тӑванӑн чапӗ
Йӗртрӗ чунӑма.

Мускава чĕнет вĕт халĕ,
Хусана чĕнмест...
Шутласассăн каллĕ-маллĕ,
Ĕненес килмест!

Мĕнлерех-ха тумланам-ши?
Çук-им куччĕнеç?..
Мĕн илсессĕн те, ятламĕ
Халăх ку чухне!

Пурăнатпăр ĕнтĕ тулăх,
Мĕн кирли — умра.
Пуринчен те хаклă пурлăх
Тетĕп çăкăра.

Чуншăн чи хакли, пахи вăл
Тетĕп туслăха.
Мускаври юратнă ывăл
Манманни паха!

Мускава илсе эп кайăп
Чăвашран салам.
Чĕркуçленĕп те пуç тайăп,
Савнă тĕп хулам!

Çитрĕм эп пĕр ывăнмасăр,
Çывăрса, канса...
Тытнă пулĕ пысăк маçтăр
Пирĕн пуйăса!

Вакунран тухсан, пăхатăп
Тĕрлĕ еннелле.
Умăмрах тăрать — куратăп:
Хамăрăн Илле!

Çуллинчен палларăм пулĕ,
Сасăран-и, тен...
Икĕ куçĕнче куççулĕ
Чĕтренет Иллен.

— Çулине аппа! Аван-и! —
Тет вăл чăвашла.
Ыталать мана тăваннăн,
Чăмăртать алла.

Çăшт утсан, куратăп эпĕ:
Умăмра — такси.
Чысĕ хаклă та хисепĕ —
Хаклă мар укçи!

Сарлака Мускав урамĕ,
Пин те пĕр урам!
Шутласа тухма пултармĕ
Пит часах никам!

Пит çӳлте Илле хваттерĕ —
Çурăнать тĕнче.
Пĕр эрне ертсе çӳрерĕ —
Çайăн тĕлĕнсе!

Çӳлелле çĕклентĕм эпĕ,
Антăм çĕр тĕпне.
Тепĕр хут курасчĕ тетĕп
Ленин аттене.

Палламан салтак масарĕ —
Манăçми масар.
Çулăмпа çунать кăварĕ —
Ĕмĕрлĕх кăвар.

Қаласа ёненмӗр эсӗр,
Тӑвансем, мана:
Тупрӑм упӑшка хӗресӗ
Ларнӑ вырӑна.

Халь унта ларать чул палӑк.
Вуласа пӗл ак:
«Ҫакӑнта Романов Павӑл,
Рядовой салтак...»

Вӑл ҫеҫ мар. Унта нумайӑн
Выртнӑ юнашар.
Ҫемьепе ларса, ҫул майӑн
Асӑнса каяр.

Пит вӑрах Илле ширанӑ
Ҫакӑ масара.
Йывӑҫсем лартса шӑварнӑ
Палӑкӗ тавра.

Вилтӑпри илсе эп ҫыхрӑм
Шурӑ тутӑрпа.
Хушшӑмӑр миҫе ҫӗр ҫухрӑм —
Хӑй ялан манпа.

Ҫулсерен тӑванӑм, килӗп,
Ҫутӑп эп ҫурта.
Ҫур чӗреҫӗм те ҫур килӗм
Манӑн ҫакӑнта.

Мускавра пурнать пулсассӑн
Ман тӑван Илюш,
Аслӑ масарти салтакшӑн
Кулянма ан хуш.

Кулленех килсе вăл курĕ
Аслă пиччĕшне,
Чĕрĕ чечексем вăл хурĕ
Шурă чул çине.

Кулянмастăп, савăнатăп
Туслăх пур чухне.
Кунсерен-çке асăнатăп
Пур тăвансене.

Çывăхри те, аякри те
Чунăм патĕнче.
Курасах килсессĕн питĕ,
Эпĕ — çул çинче.

Килĕ мăнуксен мăнукĕ
Çакăнти сăрта.
Асăнса вăл вулĕ, тупĕ
Вилĕмсĕр ята.

Юнра çеç-и-ха тăванлăх?
Шаларах шыра!
Вăл юратупа çыхланнă
Теççĕ халăхра.

Чăн тăванлăха пĕлеймĕн,
Курмасан нуша,—
Çăкăрпа, сĕтпе кĕрет-мĕн
Хамăрăн ăша.

Аслă та Çĕршывăм анлă,
Тĕнчере пĕрре.
Пытăр туслăхпа тăванлăх
Ĕмĕр-ĕмĕре!

## ÇИЛ-ТĂМАН ЮРРИ

*(Поэма)*

*Вăрçăри десантник тусăмсене*

Вунпиллĕкĕн ларчĕç. Шап-шур маскхалат.
Йĕлме йĕлтĕрсем те пăшал-автомат.
Çĕрле. Пĕлĕтсем сапаланчĕç самант.
Тăшман йăвине хатĕрленчĕ десант.

Чĕтрет самолет ик мотор вăйĕпе,
Шавпа пăтрататть кăмăла, шухăша,
Аран çунакан çутăсен çулĕпе
Чупать, çĕкленет кĕрлесе сывлăша.

Вунпилĕк десантник. Вунпилĕк çĕртен.
Ялсем тĕрлĕрен те — Çĕршывĕ пĕрре.
Пĕр шухăш, пĕр туйăм: тăшман пĕтиччен
Телей пулас çук савăнма тĕнчере.

* * *

Малта хĕрелет горизонт.
Юн тĕслĕ хăю — çывăх фронт.
Ун урлă сурансăр тухма
Тупаймăн пĕр юнсăр сукмак.

Вут-çулăм çиçет тĕттĕмре,
Унта та кунта вут çăмхи.
Шырать такама тĕттĕмре
Прожекторăн вăрăм чĕлхи.

Фронт юлчĕ хыçа — вут çĕлен.
Тыт çирĕп, пилот, штурвала.
Кĕçех персе тухрĕ çӳлтен
Хĕреслĕ çунат хурахла.

Çип çапнă пек тӳрĕ йĕрсем
Туртаççĕ пунктир çĕрелле.
Умра та хыçра вут-хĕлхем —
Мĕнле хăтăлар-ха, мĕнле?..

Пĕрре çĕкленет самолет,
Тепре вăл чăмать сĕмлĕхе.
Хăлат пек вĕçсен те пилот,
Маччи самолетăн çӳхе.

Аманчĕ юлташ... Кĕç тепри...
Тупать чунсăр пуля ӳте.
Вутланчĕ хĕреслĕ çунат,
Анать шăтарса пĕлĕте.

Кăрт-карт турĕ тем самолет,
Кĕçех сасă пачĕ пилот:
— Чыхланчĕ мотор пĕр енче,—
Салхулăх пилот сăнĕнче.—

Хăрах моторпа инçете
Нимле çитереймĕп сире...
Десантник-асли тăчĕ те
Каларĕ:
— Туссем, çул — пĕрре...

Лекмесӗр тӑшман аллине
Пилотӑмӑр ҫиттӗр киле.
Эпир халь тӑшман йӑвине
Сикетпӗр мӗнпурӗ пӗрле!

Вунпилӗк десантник сикет,
Вунпилӗк кӑвак чӑмӑркка.
Лере, аялта, мӗн кӗтет
Ҫӳлтен анакан салтака?..

* * *

Шӑвать мӗлке хыҫҫӑн мӗлке,
Юлать йӗлтӗр йӗрӗ хыҫа.
Утаҫҫӗ сынсем сӗмлӗхе,
Васкаҫҫӗ мала, анӑҫа.

Ҫайри йӗлтӗрсем — ҫунашка.
Пулинччӗ туртмашкӑн лаша.
Салтак чун-чӗри ҫавнашкал:
Юлташ пӑрахмасть юлташа.

Туртаҫҫӗ вӑйпа йӗлтӗре.
Ҫасать алла ҫирӗп кантра.
Ҫил шӑлтӑрччӗ юнлӑ йӗре,
Вӗҫтертӗр, тустартӑр юра.

Те ҫилӗ ӑнланчӗ сынна,
Те вӑхӑчӗ ҫитрӗ урма —
Пӗр ҫур сехетрен таврана
Пуҫлать ҫил-тӑман ҫавӑрма.

Умра кӑвакарчӗ вӑрман —
Часах хӳтлӗхе ҫитмелле.
Ҫил хирӗҫ. Утаҫҫӗ аран.
Пуҫпа тӗрелеҫҫӗ ҫиле.

* * *

Вăрман хӳттинчи лапамра
Ларать хурал çурчĕ пĕччен.
Қайман пуль хуçи сунара,
Тухман пуль паян килĕнчен.

Çара вырăнта ял пусси,
Çилпе сулланать тараси.
Пăрланнă, якалнă пури.
Йĕр тунă унта çынури.

Қăштах чалăшра кив мунча.
Ун алăкĕ тем яр-уçах.
Лутра, хăрăмланнă мачча.
Çемье вырнаçмалăх пĕр сак.

Çĕн милĕк выртать кĕтесре.
Мунча кăмакин ăшши пур.
Аманнă çынсем хӳтлĕхре,
Тин ӳкнĕ юр тĕслĕ шап-шур.

— Ют çыннăн шăрши мунчара!—
Салтак-хĕр тытать автомат.—
Пăхса çаврăнас пӳрт тавра.
Манпа кам пырать, лейтенант?..

* * *

... Қĕтет кинемей такама.
Мунча та хутсаччĕ каçран.
Нумай çухрăм хыççăн канма
Никам та килмерĕ, куран.

— Ăçта-ха старикĕм çухалчĕ?
Çитмерĕ-шим кайнă çĕре?
Отряд йăвинчен пĕр хыпар çук.
Пĕтнех-шим вĕсен тар-етре?..—

Кӗтет те кӗтет кинемей.
Шаккать чаранмасăр сехет.
Çăвар ăшшипе вӗрнипе
Кăштах чӳрече ирӗлет.

Ирпе пăсăласшăн çанталăк —
Ватать çавă ват шăмшака.
Сас пачӗ тултан кӗçӗн алăк —
Кам килнӗ? Кам хытă шаккать?

Çынни калаçать вырăсла —
Чунпа вăл те вырăс, те мар? .
— Мучи хăвăртрах уçкала!—
Сасси йыттăнни пек хаяр.

Тăваттăн пӳртре. Пӗри — нимӗç.
Ытти кам-мӗнне пӗлме çук.
Вӗсем ырăпа кунта килмӗç,
Шаккамӗç килсе пӗр тăрук.

Пулман пек нимскер, мăнакка
Тути таврашне шăлкалать.
Хутасшăн халех кăмака,
Хăнашăн пур чей пылпала...

Ыйтмарӗ халь нимӗç стакан,
Кăларчӗ туртса пистолет,
Тӗртет кӗпçипе кăкăртан,
Çынна куçӗпе вăл çиет:

— Ăçта партизан?!. Пӳрт-çуртна
Тӗпрен çаварса тустарас.
Хăвна, ват кăркка, вăрмана
Ярас кăларса çарамас!..—

Ӑнланчӗ ват чун. Тахӑш мурӗ
Сӑнанӑ вӗсен кил-ҫуртне.
Йӗрсе, сехӗрленнӗ пек турӗ
Чӗр юнсӑр имшер пит-куҫне:

— Мӗнле партизан?.. Таврара
Нимле ют ҫынна та курман...
Ухтарчӗҫ пӳртре, картара:
— Ну,— терӗҫ,— ватсупнӑ, тумлан!..

Ӑҫта илсе кайрӗҫ ватта?..
Пеме-и е чул тӗрмене?..
Ҫил хурлӑн йӗрет вӑрманта,
Юрпа хупласа йӗрсене.

Ҫине юр нумай пуснӑран
Турат хуҫӑлать хушӑран.
Ыйтаҫҫӗ:
　　　　— Ӑҫта партизан?..
Йӗре кӑтартмасть ват вӑрман.

Қартун ҫуртӗнче хурала
Юлать полицай.
　　　　　　　Ҫӗр кичем.
Сутма пултарать пур яла
Ҫак сутӑнчӑк, путсӗр этем.

Тупать вӑл хӑватлӑ ханша,
Ярать те ӗҫет куркапа.
Вӗри ҫулӑм тивнӗн ӑша.
Хыпать тӑварланӑ кӑмпа.

Хӑнасӑр хуҫа пек ларать.
Қуҫра пурпӗрех шик пурах.
Қӗске пӑшалне ыталать
Ӗҫсе йывӑрланнӑ хурах.

Яр уҫӑлчӗ алӑк. Алла
Пӑраҫҫӗ, ҫыхаҫҫӗ хыҫа.
Илеҫҫӗ туртса пӑшала —
Ҫамсем курӑнаҫҫӗ куҫа?!

Юрпа кӑшт шывланчӗ урай,
Лӑпланчӗҫ ҫынсем пӳлӗмре.
Куҫ айӗн пӑхать полицай —
Паллать шур халатлӑ хӗре...

Курать хӗр: йӗрке ҫук пӳртре,
Салатнӑ ҫапса чӳлмеке,
Тустарнӑ тӳшек-минтере —
Нумай ҫул пуҫтарнӑ тӗке...

— Ӑҫта ман аннеҫӗм?.. Аттеҫӗм ӑҫта?..—
Ыйтать хӗр хӑй ҫыхнӑ ҫынран.—
Ма килтӗн эс пирӗн пата?
Мӗн кирлӗ пиртен?
Мӗн шыран?!.

Хусканчӗ тути полицайӑн,
Саланчӗ таҫта ӳсӗрри.
Тӑман мӑрьере йӗрнӗ майӑн
Хӑравҫӑн чӗтрет ал-ури:

— Эп айӑплӑ мар... Илсе кайрӗҫ
Тин ҫеҫ вӑрмана аннӳне.
Кунта ухтарса тупаймарӗҫ —
Пӗлместӗп аҫу ӑҫтине...

— Шӑплан! Сассуна, ирсӗр йытӑ,
Текех илтем мар. Кирлӗ мар!..
Пӑшал эс пире хирӗҫ тытнӑ
Хура тӑшманпа кӗр кавар.

Тăван çĕр епле-ха чăтайтăр,
Çакна вăл каçармĕ нихçан!
Чунна çил-тăман илсе кайтăр,
Куçна сăхса кайтăр çăхан!..

* * *

Юман çумне çыхса хăварчĕç
Вăрман варне мăнаккана.
Тӳсет иккен этем хăвачĕ
Пуçне таймасăр тăшмана!

Тӳсет. Юман пекех вăл çирĕп.
Тӳсет — çил-тăманран хаяр.
Кунта — ун килĕ, ялĕ, хирĕ,
Кунта хуçа вăл, ют çын мар!

Тӳс, мăнаккаçăм! Куççуле çăт.
Ӳте шăнтса, хытать кĕпе...
Хăтаракансем кунта килеççĕ —
Çут çăлтăрлă çĕлĕксемпе.

Тӳс, мăнакка, чĕрӳ тапать-ха,
Чĕнет, чĕнет вăл тавăрма.
Çил ачисем куçна хупаççĕ,
Часрах хушаççĕ çывăрма...

Тӳс, мăнакка!
Çилпе ан çывăр,
Ялкăштăрах чĕрӳ вутла.
Йĕлтĕрçĕсем çитеççĕ çывăх.
Тăван хĕрна кур, ытала!

Сан тӳсессӳ вăрах юлмарĕ.
Кăварланса вутланчĕ чун.
Аран тапать тăнлав тымарĕ,
Юрпа хытса пăрланчĕ юн...

— Анне, анне!.. Сана кам тиврĕ?!—
Қасса яраççĕ кантрана.—
Ĕнтĕ сивве туймасть ӳт-тирĕ,
Çĕре тумлать куççуль кăна.

Тăван хĕре палларĕ амăш.
Палларĕ, ӳкрĕ ун çине.
Шур тăлăппа чĕркерĕ тахăш,
Вырттарчĕ ăшă юр çине...

* * *

Қилне çитет вăрман хуралĕ
Йыттипеле, ват лашипе.
Шăнса пасарнă-ши сухалĕ,
Шуралнă-ши çул ваттипе...

Полицайсем çине пăхать вăл,
Қурать шăпланнă нимĕçе:
— Қусен судне ялта тăватпăр,
Пур халăхпа вĕçлер ĕçе.

Тавах, ывăлăмсем, манмарăр,
Тавах сана та, хĕрĕмĕр...
Тăшман тĕп пултăр! Мах ан парăр,
Çĕнтерĕр, çапăр, çĕмĕрĕр!..—

Çапла пиллерĕ çирĕп ватă
Салтаксене ял умĕнче.
Пăшал кĕрлерĕ шăп тăваттă —
Тăшман ан куртăр çут тĕнче!

Лавсем çине вырнаçрĕç пурте
Партизансем патне кайма.
Çунать вăрман хуралĕн пӳрчĕ,
Вăл кирлĕ мар тек никама.

Тен, вăрçă хыççăн йăлтăр-ялтăр
Кунта çуталĕ çĕнĕ çурт.
Пулни-иртнисене манмасăр
Кунта эс килĕн тепĕр хут.

Сăмах чĕнмесĕр çеç пуç тайăн
Пĕр пĕчĕк шурă палăка.
Унта канать, тен, кукамайăм,
Тен, эсĕ пĕлнĕ мăнакка...

Тен, кукамай та пулнă пулĕ,
Мăнукĕсем те пулнă пуль...
Эх, вăрçă çулĕ!..
Çын мĕн чухлĕ
Юхтарнă юн, вĕри куççуль...

Ку çырнисем —
пĕр пăнчă евĕр,
Çырманнисем
тем чул нумай...
Çилсем!
Ан иртĕр хӳхлемесĕр
Палăксене чуптунă май.

Çилсем!
Ан иртĕр чарăнмасăр,
Пуç тайăр шурă палăка.
Шух çил-тăман тухса алхастăр
Юрпа витсе тавралăха...

Кăвак çеçкеллĕ симĕс çеçпĕл
Масар çине шăтса ларсан,
Юрлатăр юрă çамрăк несĕл,
Шавлатăр ватăлнă вăрман...

## А. А. АФАНАСЬЕВ

*(Автор ҫинчен)*

Чӑвашсен паллӑ сӑвӑҫи, пирӗн хаклӑ тусӑмӑр — Алексей Андрианович Афанасьев — хӑйӗн ҫак кӗнекине кӑларма хатӗрленӗ хушӑра сасартӑк вилсе кайрӗ, пиртен ӗмӗрлӗхех уйрӑлчӗ. Нумаях пулмасть кӑна-ха эпир унӑн шӑнкӑр шыв пек юхакан ҫепӗҫ калаҫӑвне итлеттӗмӗр, вӑтанчӑкларах куллине курattӑмӑр, ҫӗнӗ сӑввисене савӑнса вулаттӑмӑр, утмӑл ҫул тултарнӑ ятпа юбилейне ирттерме хатӗрленеттӗмӗр. Вилӗм алли шеллевсӗр, поэтӑн чӗри тапма чарӑнчӗ...

Алексей Андрианович Афанасьев 1925 ҫулта, октябрь уйӑхӗн 19-мӗш кунӗнче, Тутар республикинчи Павлӑ районне кӗрекен Тӑмпарла ялӗнче, учитель килйышӗнче ҫуралнӑ. 1942 ҫулта Тӑмпарлари вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, мӗн Ҫара кайиччене́х, Удмурт Ташлӑри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта удмурт чӗлхине тата литературине вӗрентнӗ. 1943—1945 ҫулсенче А. А. Афанасьев Совет Ҫарӗнче пулнӑ, Советлӑ Карелине нимӗҫ фашисчӗсен тыткӑнӗнчен хӑтарассишӗн пыракан хаяр ҫапӑҫусене хутшӑннӑ.

Совет Ҫарӗнчен таврӑнсан — 1945 ҫултан пуҫласа 1951 ҫулччен — хӑйӗн тӑван ялӗнчи вӑтам шкулта учительте ӗҫленӗ, Пӗкӗлмери учительсем хатӗрлекен институтран, вырӑс чӗлхипе литератури уйрӑмӗнчен, вӗренсе

тухнӑ. 1951—1960 ҫулсенче Павлӑ районенчи «Знамя» хаҫат редакцийӗнче ӗҫленӗ.

Литература ӗҫне А. А. Афанасьев 1937 ҫулта хутшӑннӑ. Унӑн чи малтанхи сӑввисемпе юмахӗсем «Пионер сасси» хаҫатра, «Хатӗр пул» журналта ҫапӑнса тухнӑ.

Ҫамрӑк поэтӑн сасси вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче тата ҫӗнӗ хӑватпа янӑраса каять. Унӑн сӑввисемпе поэмисем «Ялав» журналта ҫине-ҫинех пичетленме тытӑнаҫҫӗ. Хӑйӗн сӑввисемпе поэмисенче поэт иртнӗ Аслӑ вӑрҫӑра нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене ҫапса аркатнӑ совет халӑхне, коммунистсен партине, ленинла комсомола мухтаса юрлать. Унӑн хӗрӳллӗ туйӑмпа, ӑшӑ кӑмӑлпа ҫырнӑ произведенийӗсене халӑхӑмӑр ырласа йышӑнчӗ.

Тӑван литературӑна ытти халӑхсен хушшинче пропагандӑлас тӗлӗшпе те А. А. Афанасьев тӑрӑшса вӑй хучӗ. Поэт Қ. Ивановӑн «Нарспи» поэмине (М. Можгинпа пӗрле), А. Алкан «Шывармань» балладине, П. Осиповӑн «Айдар» драмине удмуртла куҫарса кӑларчӗ. Удмурт ҫыравҫисен произведенийӗсене чӑвашла куҫарса пичетлерӗ.

А. А. Афанасьев — 1949 ҫултанпа СССР писателӗсен Союзӗн членӗ пулнӑ. Унӑн проза тата поэзи кӗнекисем вунпиллӗкрен ытла ҫапӑнса тухнӑ. Ӑна виҫҫӗмӗш степеньлӗ Мухтав орденӗпе, медальсемпе, Тутарпа Чӑваш АССРӗсен Верховнӑй Совет Президиумӗсен Хисеп грамотисемпе наградӑланӑ.

Хӗрӳ чӗреллӗ коммунистӑн, поэтӑн сӑнарӗ яланлӑхах пирӗн асра пулӗ. Унӑн сӑвви-юррисемпе романӗсем пире малалла тата хастарлӑрах утма чӗнӗҫ.

РЕДАКТОР.

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Ќил, çуркунне | 3 |
| Çурхи шав | 4 |
| Хĕл каять | — |
| Ќĕрлетĕр аслати! | 5 |
| Ялти çумăр | 6 |
| Хут çĕлен | 7 |
| Тĕрĕслĕх çурални | 8 |
| Малашлăх | — |
| Хĕçпăшала пĕтермелле | 9 |
| Хĕвел | 10 |
| «Санран сумли пулман, çуралнă çĕрĕм!..» | 12 |
| Вилĕмсĕрлĕх | 13 |
| Шăпа | 14 |
| Телеграф юпи | 16 |
| Çухатмарăм | 17 |
| Виç кĕтеслĕ çыру | — |
| Ват салтак. | 18 |
| Аякранах пуйăс килчĕ | 19 |
| Хуçа | 23 |
| Ťатулăх пулсан | 24 |
| Чĕлĕм | 25 |
| «Вилнисене эп чĕрĕ пек куратăп...» | — |
| Çĕршыв-анне | 26 |
| Хамăр ен | 27 |
| Юратнă Атăлăм | 29 |
| Асаттесем пилленĕ вырăн | — |
| Поэтăмăр пирĕнпе ялан | 31 |
| Анне | 33 |
| Хĕвелĕм-телейĕм | 34 |
| «Ќĕнекепе хĕвел тан мар текен...» | 35 |
| Ир тăрсан | 36 |
| Çул çинче | 37 |
| Йăлтăркка кăвар | 38 |
| Таван тавралăхăм | 39 |
| Ямшăк | 40 |
| Ĕççынни | 41 |
| Ќăмака | 42 |
| Кантăр вăрри | 43 |
| Ќуяна хăвала... | 44 |
| Вăй патăр | — |
| «Вĕçмешкĕн кирлĕ-им çунат кăна?..» | 45 |
| Çăкăр | 46 |

Акана тухсан . . . . . . . . —
Çул умĕн . . . . . . . 47
Кашни ялăн хăй илемĕ . . . . . . 48
Тунсăх вăхăтра . . . . . . . 49
Хăна килсен . . . . . . . 50
Ялта суеçĕсĕр кичем . . . . . . —
Ялтан яла чупма... . . . . . . 51
Тухтăра . . . . . . . . 52
Юрă . . . . . . . . —
Кĕвĕçместĕп . . . . . . . 53
Вунсаккăрта . . . . . . . 54
Хĕрсем . . . . . . . . 55
Ырă кур . . . . . . . . 56
Асăнмалăх чупту . . . . . . —
Курас килет . . . . . . . 57
Юратупа кӳлешӳ . . . . . . —
Пуласчĕ саркайăк . . . . . . 58
Сăмах . . . . . . . . —
Тантăшăмсене . . . . . . . 59
Юрăпа юмах . . . . . . . 60
Асăнмалăх . . . . . . . —
Аякран пăхсан . . . . . . . 61
Шеллетĕп . . . . . . . . —
Яланах асра . . . . . . . 62
Ял куракĕ . . . . . . . . 63
Пуйăссем иртеççĕ . . . . . . —
Хуркайăксем . . . . . . . 64
Кĕркунне . . . . . . . . 65
Хурланмастăп . . . . . . . 66
Ыйхă тăмани . . . . . . . 67
Уйран . . . . . . . . —
Матрӳшке чейĕ . . . . . . . 68
Лайăхрах пĕлес тесен... . . . . . 69
Мунчара . . . . . . . . —
Тăванлăх. Поэма . . . . . . . 71
Çил-тăман юрри. Поэма . . . . . 82
А. А. Афанасьев *(Автор çинчен)* . . . . 92

**Алексей Андрианович Афанасьев**

**ВЕСЕННИЙ ГРОМ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор В. О. Максимов, Художник Ю. М. Никифоров. Художественный редактор Э. М. Юрьев. Технический редактор Н. В. Васильева, Корректор Р. П. Кудряшова

ИБ 1809.

Сдано в набор 11.12.85. Подписано к печати 28.03.86. НТ 03316. Формат 70×90¹/₃₂. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 3,51. Усл. кр.-отт. 3,66. Учетно-изд. л. 3,75. Тираж 1000 экз. Заказ № 4810. Изд. № 51. Цена 35 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

35 пус

Пирĕн юратнă поэтăмăрăн — А. А. Афанасьевăн (1925—1985 çç.)—çĕнĕ кĕнекине юлашки çулсенче çырнă произведенисем кĕнĕ. Вĕсем поэтăн вилĕмсĕр чун-хавалне, кăмăлне аван кăтартаççĕ.

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ